ИОАНН ÇЫРНĂ
ТАСА ЕВАНГЕЛИ.

Мтф.18:20.

© GUTE BOTSCHAFT VERLAG (GBV)
P.O.B. 80
D-6340 Dillenburg 2
Germany

«ХĂВĂН ĂШĂНТИ ÇЫН ВАЛЛИ» ЯТЛĂ ПĔЧĔК КĔНЕКЕРЕН

3 х ĂНТĂЛУ

- **тăнăçлăх патне**
- **хăрушсăрлăх патне**
- **ирĕклĕх патне**

1 х ТУРĂ ИИСУС ХРИСТОСРА ХУРАВ ПАНĂ...
Ыйтусем çине хуравланисем

Çак тĕнче пăтраннин тĕп сăлттавĕ, Турăпа çын хушшинчи йĕркесĕрлĕхсем, урăхла каласан, вĕсен хушшинчи çыхăнусем арканни.

В. ПАСКАЛЬ (1623–1662), французсен философĕ тата чи пултаруллă математикĕ „ама çури амăшĕсенче“ çырнă:

„ Пурнăçăмра эпĕ Çăлаканăма, Вăл мана, халсăр, телейсĕр, мăнкăмăллă çынна, Хайĕн ырлăхĕпе этемлĕх çылăхĕсенчен çăлса çын тунăшăн, кунсерен мухтатăп.

Пĕтĕм чап та мухтав Ăна пултăр, мĕншĕн тесен эпĕ, хуйхăсуйхăпа аташнисĕр пуçне, айван кăна.“

„Ăшри пурнăç?“ – Этем япала-пуянлăх сăнчăрне пула е тулти илемлĕхе кура халиччен нихçан пулман пек пăсăлчĕ.

ГЕТЕ Фаустне калаттарнă: „Эпĕ çаплах çăткăнлăхран киленӳ патне вирхĕнетĕп, анчах та киленӳре çăткăнлăх пирки асапланатăп.“ Çак сăмахсенче çынна халиччен пухăннă вăйлă туртăмĕпе тĕмсĕлнине сăнарласа кăтартнă. Этем „пурнăçра“ мĕн чухлĕ нумай пухать, çавăн чухлех, хăйăр пек, пӳрнисем хушшинчен юхтарса кăларать, асаплану çеç юлать вара. Унтан та ытларах пурнăç ултавлă шанчăк пек туйăнать, мĕншĕн тесен вăл хăй ăшĕнче юлашки чăнлăхне тытса тăраймасть.

„Ăшри пурнăç“ – пирĕн туйăмсемпе шухăшăмăрсенчен те пысăкрах-ши вара? Çапла. Вăл пирĕн пурнăçăмăр варрийĕ, çак сăмахсен пĕлтерĕшĕпе ахаль çеç çырлахмасть, çавна хирĕçлет те.

Чиркӳ Ашшĕ Августин çак шухăша урăхларах уçса панă, Турă çынна Хăй патне çывхартмашкăн пултарнă пулсан, Турă патĕнче

канăçлăх иличчен, çыннăн чĕри лăпланаймасть. Çакă пулать ĕнтĕ, авăрти çаврăнура, хыпăнса ĕçленинче тата тĕлсĕр ирттернĕ халь-хи вăхăтри çын ыйтăвĕ çине тĕплĕн хуравлани.

„Эй асапланакансем, хĕн-хур куракансем, пурсăр та ман патăма килĕр, Эпĕ сире лăплантарăп“, (Матф. 11,28). тесе чĕнет Турă Иисус Христос урлă. Христос каланă: „Эпĕ: чĕрĕлĕх тупăр, чĕрĕлĕх вĕсен ытлашшипех пултăр, тесе килтĕм“ (Иоанн 10,10).

Çакă шухăшласа кăларнă е мĕнле те пулин тĕн пуçласа яракан калани-и? Çук. Ку чăнлăха эсĕ те ĕçпе çирĕплетсе пама пулта-ратăн.

Ун Сăмахне тĕрĕс ăнланса илме ирĕккĕн вула, чунтан кĕлĕ ту, мĕншĕн тесен, Вăл санăн чĕрӳне те ăс-тăнна та калатăр. Çав анчах витĕмлĕ. Эсĕ шанчăкпах кĕтме пуçлатăн: „Вăл хамăра Çăлакан Туррăмăра та кăмăллă: Вăл пур çынна та çăласшăн, чăнлăха пĕлтерсе çитересшĕн“ (1 Тимоф. 2,3–4).

„ТУРĂ ĔМĔТЛЕНЕТ“ – ЭСĔ ĔМĔТЛЕНЕТĔН-И?

Малалла ĕненӳ пирки историре тĕнчипех паллă та мухтавлă çынсем каланисене тата çирĕплетсе панисене илсе кăтартнă. Çавăнпа та: „Турă Ăна вĕçĕмсĕр асла кăларнă, Ăна пур ятран та чаплă ят панă“ (Филиппийц. 2,9).

ИОГАН КЕПЛЕР (1572–1630), астроном тата математик, халь-хи астрономине пуçарса яраканĕ, вилес умĕн: „Хăвăрăн ĕмĕтĕре мĕнпе никĕслетĕр Эсир?“ тесе ыйтсан, вăл каланă: – „Манăн пĕртен-пĕр ĕмĕт пире Çăлакан Иисус Христосăн хисепĕ, тивĕçлĕ ĕçĕ пулнă. Унта пытаннă, эпĕ çакна пĕр иккĕленмесĕр çирĕплетсе парасшăн, манăн хӳтлĕх, ĕмĕт те мухтав“.

ЭМАНУЕЛ КАНТ (1724–1804), философ, хăйĕн пурнăçĕ вĕç-ленсе килнĕ чух каланă: „Эпĕ халиччен вуланă мĕнпур кĕнекесене пĕрле пухсан та, мана Псаломран ытла нихăшĕ те канăçлăх параймарĕç. „Вилĕм тĕттĕмĕ тăракан варпа кайсан та, усалтан хăрамăп эпĕ, мĕншĕн тесен, Эсĕ манпа пĕрле. Санăн тую, Санăн патакку – çавсем лăплантараççĕ мана“ (Пс. 22,4).

ГЕНРИХ ГЕЙНЕ (1797–1856), поэт тата журналист, хăçан-тăр ун çинчен: „çĕнĕрен хунакан нимĕç сăвăçĕсен вăрманĕ“ тенĕ, хăй-ĕн 2-мĕш кăларăмри „Германири тĕн историйĕ тата философийĕ“ умсăмахĕнче çакăн пек каланă: „Юлашки „Романсеро“ кĕнекем-ре, эпĕ хамăн чунăмри улшăнусем Турă еннелле туртăннине кăларăм. Хам çуталса çитнишĕн, эпĕ пĕртен-пĕр кĕнекене тав тăватăп. Пĕр кĕнеке? – ыйтатăр Эсир. Çапла, çав кĕнеке Библи

ятлă. Кам хăйĕн Туррине çухатнă, çав çын Ăна каллех çак кĕнекере тупма пултарать, кам Ăна нихăçан та пĕлмен, çавна çак кĕнекери Турă Сăмахĕн сывлăшĕ вĕрсе çутатать.

Тĕншĕн çĕкленнĕ туйăмшăн эпĕ çак Таса Кĕнекене тав тăватăп. Тĕлĕнмелле! Пурнăçăн вĕçне çитичченех эпĕ тĕрлĕ философи ташламалли вырăнĕсенче сулланса çӳренĕ, хама пĕтĕм йĕркесĕр сывлăшсен ахăрашăвне халалланă, тĕрлĕ çулпа аташса çӳренĕ, анчах та канăç курман, халь эпĕ, сасартăк, ăçта Том пичче тăнă, çав вырăна йышăнтăм, шăпах çав вырăн Библи никĕсĕ пулчĕ. Мĕнле сăпайлăх. Пĕтĕм пĕлӳлĕхпе те эпĕ, çав кĕлмĕçĕ, нимĕн те пĕлмен, саспаллисене те аран-аран вулакан негăртан, ытларах пĕлеймерĕм."

ГАЛИЛЕО ГАЛИЛЕЙ (1564–1642), итали тĕпчевçи тата астрономĕ. „Таса Çырулăх нихăçан та суйма та аташма та пултараймасть. Унта каланисем чăн-чăнахах тĕрĕс те сиенсĕр. Вăл Хăй аташма пултараймасть, Ăна ăнлантарса паракансем çеç хăш-пĕр çĕрте йăнăшма пултараççĕ. Тата нумай чухне çавна, кашни контекст валлиех тĕрлĕрен ăнлантарни кирлĕ. Таса Çырулăх тата çутçанталăк, иккĕшĕ те Туррăн Сăмахĕнчен тухаççĕ, пĕри – Таса Сывлăш хушнипе, тепри – Турă хушнипе пурнăçланса тăнă."

МАКС ПЛАНК (1858–1947), физик, нобель преми лауреачĕ. „Таçта, темле инçете пăхас пулсан та эпир тĕнпе çутçанталăка тĕпчекен наукăсенче хирĕçӳ тупаймастпăр. Пачах та урăхла: вĕсем тĕп вырăнсенче питĕ те килĕштерсе тăраççĕ. Тĕн тата çутçанталăка тĕпчекен наука пĕр-пĕрне кăлармаççĕ, паянхи вăхăтри пекех, пĕрисем ĕненеççĕ, теприсем вĕсенчен хăраççĕ. Çак икĕ вĕрентӳ пĕр-пĕринпе çыхăнса тата пĕр-пĕрне пăхăнса тăраççĕ.

Чи пĕлтерĕшли, ĕçпе кăтартса пани çакă пулать: тĕнпе çутçанталăка тĕпчекен наука пĕр-пĕрне хирĕç тăманнине историре пулса иртнĕ ĕçсем çирĕплетсе параççĕ: енчен те çак ыйтăва питĕ тишкĕрсе тĕрĕслес пулсан, ак мĕн курма пулать: пур вăхăтри чи аслă çутçанталăк тĕпчевçисем – Ньютон, Кеплер, Лейбниц – çав тĕн сывлăшĕпе хăватланнă...

Турăран иртмесен тин шалти çирĕплĕх, вăрăм тăнăçлăх туянать пирĕн чун, вара вăл питĕ пысăк пуянлăхăмăр пулса тăрать..."

ЭРНСТ МОРИТЦ АРНДТ (1769–1860), государство деятелĕ тата поэт. „Хисеплени – чи пысăк туйăм, унпа этем кăмăлĕ хуçа пулса тăрать. Ак çак пулать те ĕнтĕ пĕтĕм çутçанталăк пурнăçĕн чи çӳлти пусăмĕ.

Чăн малтанах мĕнле пулнă, çавнашкалах юлнă: ĕненӳ – вăл аслăран та аслă, ĕмĕрхи, пурнăç пуçламăшĕ: пĕлӳ – вăл пĕчĕккĕ, этеммĕн, пуçламăшĕнчен пулакан япала кăна."

МАТИАС КЛАУДИУС (1740–1815), поэт тата писатель. „Кам Христоса ĕненесшĕн мар, Унсăр хăйĕн пуласлăхне пĕлеймессине, вăл курма тивĕç. Эпĕ те эсĕ те çавна пĕлместпĕр. Эпир яланах, кам та пулсан пирĕн чуна çирĕплетессе кĕтетпĕр, вилес умĕн, хăйĕн аллипе пирĕн халсăрланнă ӳт-пĕве тытса пырасса; çакна пĕр Вăл кăна тума пултарать, Ун çинчен çырса кăтартнă пек, кам Ун вырăнне йышăнма тивĕçлĕ, эпир Унсăр пуçне урăх никама та пĕлместпĕр".

ЖАН–ЖАН РУССО (1712–1778), французсен философĕ. „Эпĕ Библие юратнă, ăна йышăннă, валеçсе çӳренĕ тата каласа ăнлантарнă: эпĕ ăна пĕтĕм чун-чĕремпе, вăй-хăватăмпа çаклантăм. Эпĕ çырнисем пĕтĕмпех Евангелине юратса, Иисус Христоса хисеплесе тăраççĕ. Çак Таса Кĕнекене вĕрентекенĕн тата канаш паракансăн саккунĕ тесе йышăнмалла."

Ф. ДОСТОЕВСКИЙ (1821–1881), вырăссен писателĕ тата поэчĕ. „Ниме тăман, пăсăлнă, кĕвĕçӳллĕ тата хăйсене кăна юратакансем, Турра та леш тĕнчене те пăрахăçлаççĕ.

Христоса тĕксе янă вăхăтра вĕсем, çитейми тĕллеве: этемлĕхĕн илемлĕхĕпе ырăлăхне пĕтереççĕ. Мĕн параççĕ-ха вĕсем уншăн, çавăн евĕрлине?

Хальхи вăхăтра пĕртен-пĕр çын – Христос тĕслĕхĕ кăна пурăнать.

Пĕтĕм этемлĕх шанчăкĕ пĕтесрен çăласси çак сăмахсенче пулать: „Сăмах ӳтленчĕ те, чăнлăхпа тата ырăлăхĕпе пирĕнпе пурăнчĕ..." (Ев. Иоанн 1,14).

ВИКТОР ГЭСС (1883 – 1964), фортгам университечĕн профессорĕ, нобель премии лауреачĕ. „Чăн-чăн ученăй Турра ĕненме пултарать-и? Эпĕ шутлатăп, пултарать тесе... Çирĕплетсе пама пултаратăп, мĕн пур наукăра: физикăпа тата геофизикăпа ĕçленĕ чухне, эпĕ хамăн тĕпчев ĕçĕсенче, нимĕнле Ĕненĕве Турă – Пултаракана хирĕçленине тупма пултараймарăм."

Л. Б. ДЖОНСОН (1908 – 1973), США президенчĕ. „Турăпа калаçнисĕр пуçне, урăх нимĕнле çăлкуç та çук, унтан кăна эпир çĕнĕ вăй, хавас кăмăл ăсма пултаратпăр".

АЛЬБЕРТ ЭНШТЕЙН (1879 – 1955), физик тата математик, ăсчахсен ларăвĕнче Штутгартра 1948 çулта: „Чăн-чăн ыйту вăл

шалти чун тытăмĕ тата çынсен шухăшлавĕ. Вăл физикă ыйтăвĕ мар, этика, йăла-йĕрке ыйтăвĕ.

Мĕн хăратать-ха пире? Атом бомби çурăлнă вăй мар, усалланса пыракан çынсен чĕри вăйĕ, усаллăхшăн çурăлакан вăй.

Турă ячĕшĕн, енчен те эсир Ăна ĕненетĕр, Унăн умĕнче Сирĕн ырăлăхпа тулмалла, Хăвăрăн тĕпчев ĕçĕсенчи мăнкăмăллăха çĕнтермелле: енчен те апла пулмасан, эпир çухалатпăр, пĕтетпĕр."

ВЕРНЕР ФОН БРАУН (1912–1977), ракетăсем тăвакан конструктор. „Эпĕ чунăн вилĕмсĕрлĕхне ĕненетĕп. Ним çук çĕрте нимĕн те пулма пултараймассине, наукă пире çирĕплетсе пачĕ. Çавăн пекех пурнăç та, чун та – пĕр йĕрсĕр çухалма пултараймаççĕ, çакă пĕлтерет те ĕнтĕ, вĕсем вилĕмсĕррине."

В. ПАСКАЛЬ (1623–1662), французсен фолософĕ тата математикĕ хăйĕн „Шухăшĕсенче" çырнă: „Çак çĕр çинче мĕн кăна пур, вăл пĕтĕмпех этем айванлăхне кăтартать, çав вăхăтрах ăна Турă шелленине: Турăсăр этемĕн халсăрлăхне, Турăпа этемĕн хăватлăхне.

Ăслăлăх йĕрне йышăнмасăр, ăна ăслисен шутне кĕртмеççĕ.

Асаплăхра пире çунат паракан пĕртен-пĕр япала вăл, сапаланни, çав вăхăтрах вăл çӳлти шайра тăракан çуклăхăмăра пĕлтерет. Çав пире, хамăр пирки шутлассине пĕтерет те ĕнтĕ, каярахпа аркану патне илсе пырать."

ИСААК НЬЮТОН (1643–1727), акăлчансен çутçанталăк тĕпчевçи, çĕнĕ математикă, физикăпа астрономи валли çул уçаканĕ. Вилес умĕн вăл çапла каланă: „Ĕмĕрĕмре эпĕ икĕ питĕ кирлĕ чăнлăха пĕлтĕм: пĕри – эпĕ çылăха путни, тепри – манăн Çăлаканăм, виçесĕр яслă Иисус Христос пулни."

ЭДВИН КОКЛИН, биолог. „Çĕр çинчи пурнăç хăй тĕллĕн пуçланса кайнине, çакăн пек тĕслĕхпе танлаштарма пулать: пĕтĕмĕшле йĕркелесе çитернĕ словаре типографи сирпĕнсе кайнă хыççăн пулнă, тенипе."

И. Я. Яковлев Халалĕнчен

Эй тусăмсем, хамăн тăван çыннăмсем, чăвашсем! чунăм пĕрмаях сирĕншĕн çунатчĕ, халĕ те акă манăн мĕнпур шухăшăм сирĕн çийĕре куçрĕ. Юлашки тертĕме пуринчен маларах татах сире каласа хăварас тетĕп.

Турра ĕненсе пурăнасси калама çук пысăк япала – пуринчен ытла эсир çавна хытă тытса тăрăр. Ĕненӳ этеммĕн ăсне, кăмăлне çунатлантарса çăмăллатать, чун пурнăçне канăçлăх парать, лăплантарать; инкек-синкек, хуйхă-мĕн курнă вăхăтра чуна хăват парать; ĕçсем ăнса телейлĕ пурăннă чух, ĕненӳ чуна тасатать, ăна çутатса тăрать. Турра ĕненсе пурăнсан, пурнăç хытти этемшĕн хăрушă мар; Ăна ĕненсе тăмасан, çĕр çинчи пирĕн пурнăç сивĕ пулать, тĕттĕм пулать. Тĕнчене пултарнă çӳлти Турра ĕненсе тăрăр. Ырă ĕçе те, усал ĕçе те чăн аслă тӳрĕлĕх татĕ, – Турă сут тăвĕ, – вăл сут тӳрĕ, вăл сут пит хăрушă...

Çӳлти аслă Турă умне кайма хатĕрленсе, сире каласа хăварас сăмахăм манăн мĕнпурĕ çакă ĕнтĕ. Ирĕклĕ, е ирĕксĕр эпĕ кама та пулин кӳрентерсе, вăл ман çие çил хывса çӳренĕ пулсан, пурсăра та тархаслатăп: çиллĕре манăр, каçарăр мана, маншăн Турра кĕлтăвăр. Эй тăван çыннăмсем! Чăн кăмăлтан тав тăватăп сире. Эсир маншăн ялан та ăшă пултăр, кăмăллă пултăр. Сиртен çакна курма эпĕ тивĕçлĕ те пулман. Пурăнан пурнăçăрта сире пурсăра та Турă сыхласа, упраса усратăр.

Иван ЯКОВЛЕВ
Чĕмпĕр, 1921 çулхи çурла уйăхĕн 4-мĕшĕ кунĕ.

ИОАНН ÇЫРНĂ ТАСА ЕВАНГЕЛИ

Çыраканĕ. Тăваттăмĕш Евангелине Иоанн апостол çырнă (Иоанн 21: 24). Çакăн пирки иккĕленекен тишкĕрӳçĕсем сахал мар пулнă, анчах та тĕплĕн сӳтсе-явса тĕрĕсленĕ тата наукăлла тишкĕрӳсем тунă хыççăн, кам çырнине те, чăн малтанах, хăш вăхăтра çырнине те çирĕплетсе пама май килнĕ.

Хăçан çырнă. Ăна 85-пе 90 мĕш ç. ç. Христос çуралнă хыççăн çырнă пулнă. Юлашки вăхăчĕ – тĕрĕсрех те пулĕ.

Мĕн çинчен çырнă. Çавна Пуçламăшĕнче (1:1–14) тата Евангелири 20-мĕш пайĕнче юлашки сăвăра палăртнă (20:31). Акă вăл: Ĕмĕрхи Сăмах ӳтленни, Турă Ывăлĕ, тата Турă Хăй, Иисус Христосра: 1) Турра çĕр çине çынсем пек пурăннă çĕре ярас тĕллевпе: 2) мĕншĕн тесен, кам Ăна ĕненет, „Христоса, Туррăн Ывăлне", (20:31), ĕмĕрлĕх пурнăç илет. Питĕ кирлĕ, çак Евангелири „шанчăклăх" тата „пурнăç" сăмахсем пулаççĕ.

Кĕнеке çичĕ сыпăка пайланать: 1. Пуçламăшĕ: Ĕмĕрхи Сăмах Иисус Христос пулса ӳтленет, 1:1–14. 2. Шыва Кĕртекен Иоанн каласа кăтартни, 1:15–34. 3. Иисус Христос уççăнах ĕçлесе çӳрени, 1:35–12:50. 4. Вăрттăн „Хăйсеннисемшĕн" ĕçлесе çӳрени, 13:1–17:26. 5. Христос Хăйне Чӳк тума пани, 18:1–19:42. 6. Иисус Христос чĕрĕлсе тăрса, ыттисене курăнни, 20:1–31. 7. Юлашкинчен çырни: Христос – пурнăç тата ĕç Турри, 21: 1 – 25.

Çак кĕнекере çырса кăтартнă ĕçсем çичĕ çула яхăн тăсăлнă.

ИОАНН ÇЫРНĂ ТАСА ЕВАНГЕЛИ.

1 - мĕш ГЛАВА

Ĕмĕрхи "Сăмах ÿтленсе тăнă"

1. **СĂМАХ** чăн малтанах пулнă, çав Сăмах Турă-
ра пулнă, Сăмах Вăл Хăй Турă пулнă.
2. Вăл малтанах Турăра пулнă.
3. Мĕн пулма пуçлани, пурте Ун урлă пулма пуç-
ланнă, Унсăр нимĕн те пулма пуçланман.
4. Унра пурнăç пулнă, пурнăç вара çынсем валли
çутăлнă;
5. Çутă тĕттĕмре çутатать, тĕттĕм ăна хупласа
илеймен.
6. Иоанн ятлă, Турă янă çын пулнă.
7. Хăйĕн урлă пурте Çутта ĕненччĕр тесе, вăл
Çутă çинчен каласа пĕлтерме килнĕ.
8. Хăй вăл Çутă пулман, Çутă çинчен каласа пĕл-
терме янă çын анчах пулнă.
9. Тĕнчере çуралакан çынсене, пурне те Çута-
такан чăн-чăн Çутă пулнă.
10. Çавă тĕнчере пулнă, тĕнчене Вăл пултарнă,
анчах тĕнче Ăна пĕлмен.
11. Хăйĕннисем патне килсен, хăйĕннисем те Ăна
йышăнман.
12. Хăйне йышăнакансене, Хăйĕн ятне ĕненекен-
сене Вăл Турă ачисем пулма ирĕк панă,
13. Вĕсем юнран мар, ÿтрен те мар, арçынран та
мар, Турăран çуралнă.
14. Сăмах ÿтленчĕ те, чăнлăхпа тата тулли ырлă-
хĕпе пирĕнпе пĕрле пурăнчĕ; эпир Ун мухтавне,
Атте Туррăн пĕртен-пĕр Ывăлне тивĕçлĕ мухтава
куртăмăр.

15. Иоанн Ун ҫинчен пӗлтерсе хытӑ сасӑпа калана: "Эпӗ калани, ман хыҫран Килекенни манран мала тухрӗ, мӗншӗн тесен Вӑл манран малтанах пулнӑ, Вӑл Ҫакӑ ӗнтӗ.

16. Унӑн тулли ырлӑхӗнчен эпир пурте ырлӑх ҫине ырлӑх илтӗмӗр;

17. Мӗншӗн тесен закона Моисей урлӑ панӑ, ырлӑхпа чӑнлӑх Иисус Христос урлӑ килнӗ.

18. Турра никам та, нихӑҫан та курман; Ашшӗ ӑшӗнче пурӑнакан пӗртен-пӗр Ывӑлӗ, Ҫавӑ Турра кӑтартрӗ", — тенӗ.

Шыва кӗртекен Иоанн Христос ҫинчен каласа пӗлтерни

19. Акӑ Иоанн каласа кӑтартни: Иудейсем Иерусалимрен священниксемпе левитсене ярса, Иоаннран: "Кам эсӗ?" — тесе ыйтма хушсан,

20. Вӑл пӗр пытармасӑр;"Эпӗ Христос мар" — тесе каланӑ.

21. Унран татах ыйтнӑ: "Кам вара эсӗ, Илия-и?" — тенӗ. Вӑл каланӑ: "Ҫук", — тенӗ. Пророк-и? тесе ыйтсан: "Ҫук", — тенӗ.

22. Вӗсем ӑна каланӑ: "Кам тата эсӗ? Хамӑра яракансене каласа пӗлтерме, эсӗ пире хӑвӑн ҫинчен мӗн калӑн? "— тенӗ.

23. Вӑл каланӑ: "Эпӗ, Исаий пророк каланӑ пек, Турӑ валли ҫул тӳрлетӗр тесе пушхирте чӗнекен сасӑ", — тенӗ. (Исаий 40 : 3).

24. Ыйтма пынисем фарисейсем пулнӑ;

25. Вӗсем унран татах ыйтнӑ: "Эсӗ Христос та мар, Илия та мар, пророк та мар пулсан, мӗншӗн вара шыва кӗртетӗн?" — тенӗ.

26. Иоанн вӗсене хирӗҫ каланӑ: "Эпӗ шыва

кĕртетĕп; анчах сирĕн хушшăрта Пĕр Çын тăрать, эсир Ăна пĕлместĕр.

27. Ман хыçран Килекенни Çавă ĕнтĕ, çапах та Вăл манран мала тухрĕ; эпĕ ун урине тăхăнмаллийĕн чĕнне салтма та тивĕçлĕ мар", — тенĕ.

28. Çакă Иордан шывĕн леш енче Вифаварта, Иоанн шыва кĕртекен çĕрте пулнă.

29. Тепĕр кунне, Иоанн хăй патне Иисус пынине курсан каланă: "Акă, тĕнче çылăхне Хăй çине илекен Турă Путекки;

30. Эпĕ калани Çакă ĕнтĕ, ман хыçран Килекенни манран мала тухрĕ, мĕншĕн тесен Вăл манран малтан пулнă;

31. Эпĕ пĕлменччĕ Ăна; Вăл Израиле курăнтăр тесе, эпĕ çынсене шыва кĕртме килтĕм".

32. Иоанн Ун çинчен пĕлтерсе татах каланă: "Святой Сывлăш пĕлĕт çинчен кăвакарчăн пек курăнса анса, Ун çинче тăнине эпĕ куртăм:

33. Эпĕ пĕлменччĕ Ăна; анчах шыва кĕртме мана Яраканни, мана ларĕ: "Кам çине Святой Сывлăш аннине тата Ун çинче тăнине курăн, Святой Сывлăшпа хăватлăлантараканни Çавă пулĕ", — терĕ.

34. Эпĕ куртăм та, Турă Ывăлĕ Çакă тесе каласа кăтартрăм".

Христос Хăй çинчен пĕлтернĕ тăрăх, Ăна малтан ĕненнĕ вĕренекенĕсем

35. Тепĕр кунне Иоанн каллех çавăнта хăйĕн икĕ вĕренекенĕпе тăнă.

36. Вара Иисус пынине курсан каланă: "Акă Турă Путекки", — тенĕ.

37. Иоаннран çак сăмахсене илтсен, вĕренекенĕсем иккĕшĕ те Иисус хыççăн кайнă.

38. Иисус каялла çаврăнса пăхнă та, вĕсем Хăй хыçĕнчен пынине курсан каланă: "Мĕн кирлĕ сире?" — тенĕ. Вĕсем Ăна каланă: "Равви, (Вĕрентекен) Эсĕ ăçта пурăнатăн?" — тенĕ.

39. Вăл вĕсене каланă: "Пырсан куратăр", — тенĕ. Вĕсем кайнă та, Вăл ăçта пурăннине курнă, çав кун вара Ун патĕнче ирттернĕ. Вуннăмĕш сехет тĕлĕ пулнă.

40. Иоаннран илтсе, Иисус хыççăн кайнă икĕ вĕренекенĕнчен пĕри, Петр текен Симон шăллĕ Андрей пулнă.

41. Вăл чи малтан хăйĕн пиччĕшне Симона тупса каланă: "Эпир Мессийăна тупрăмăр", — тенĕ. (Вăл Христос тени пулать).

42. Ăна вара Иисус патне илсе пынă. Иисус ун çине пăхса каланă: "Эсĕ-Иона ывăлĕ Симон, эсĕ Кифа ятлă пулăн"(Кифа тени Петр,"чул"тени пулать).

43. Тепĕр кунне Иисус Галилейăна кайма шутланă; вара Филиппа курсан, ăна каланă: "Ман хыççăн пыр", — тенĕ.

44. Филипп вăл, Андрейпе Петр пурăнакан Вифсаида хулинчен пулнă.

45. Филипп Нафанаила тĕл пулсан каланă: "Эпир Моисей законĕнче тата пророксен кĕнекинче çырнă Иосиф Ывăлне, Назаретри Иисуса тупрăмăр", — тенĕ.

46. Нафанаил ăна каланă: "Назаретран мĕн те пулин ырри пулĕ-ши?" — тенĕ. Филипп ăна каланă: "Кайса пăх эппин", — тенĕ.

47. Иисус Хăй патне Нафанаил пынине курсан, ун çинчен каланă: "Акă, чăн Израиль çынни, ун ăшĕнче ултавлăх çук", — тенĕ.

48. Нафанаил Ăна каланă: ”Эсĕ мана ăçтан пĕлетĕн?” — тенĕ. Иисус ăна хирĕç каланă: ”Сана Филипп чĕничченех, эсĕ смоква йывăçĕ айĕнче чухнех Эпĕ сана куртăм”, — тенĕ.

49. Нафанаил каланă: ”Равви! Эсĕ Турă Ывăлĕ, Эсĕ — Израиль Патши”, — тенĕ.

50. Иисус ăна хирĕç каланă: ”Эпĕ сана смоква йывăç айĕнче куртăм тесе каланăшăн эсĕ Мана ĕнентен, кунтан та ытларах курăн-ха”.

51. Татах ăна каланă: ”Чăн-чăнах калатăп сире: паянтан пуçласа, пĕлĕт уçăлса тăнине тата Туррăн Ангелĕсем Этем Ывăлĕ патне анса хăпарнине курма пуçлатăр”, — тенĕ.

2 - мĕш ГЛАВА

Кана хулинчи туйра Христос пĕрремĕш хăват туни

1. **ВИÇÇĔМĔШ** кунне Галилейăри Кана хулинче туй пулнă, унта Иисусăн Амăшĕ те пулнă.

2. Çав туя Иисуса та, Унăн вĕренекенĕсене те чĕннĕ.

3. Унта эрех çитмен пирки, Иисусăн Амăшĕ Ăна каланă: ”Вĕсен эрех çук”, — тенĕ.

4. Иисус Ăна каланă: ”Эй, Анне! Манăн та, Санăн та мĕн ĕç пур унта? Ман вăхăт халь çитмен-ха”, — тенĕ.

5. Унăн Амăшĕ тарçăсене каланă: ”Вăл сире мĕн калĕ, эсир çавна тăвăр”, — тенĕ.

6. Иудейсен тасалас йăлипе, çавăнта икшер е виçшер виçе кĕрекен чулран тунă ултă шыв савăчĕ ларнă.

7. Иисус тарçăсене каланă: ”Савăтсене шыв тултарăр”, — тенĕ. Вара лешсем савăтсене туллиех шыв тултарнă.

8. Унтан вĕсене каланă: ”Ĕнтĕ ăсăр та, туй пуçлăхне леçсе парăр”, — тенĕ. Вĕсем леçсе панă.

9. Туй пуçлăхĕ, шывран тунă эрехне астивсе пăхсан (вăл çав эрехе ăçтан илнине пĕлмен, ăна шыв ăсакан тарçăсем анчах пĕлнĕ) кĕрĕве чĕнсе илнĕ те,

10. Ăна каланă: ”Кирек кам та малтан лайăх эрех парать, ĕçсе çитсен вара начартараххине парать, эсĕ лайăх эрехне халиччен кăлармасăр тăнă”, — тенĕ.

11. Çапла Иисус, хăватсем тума Галилейăри Кана хулинче пуçласа, Хăйĕн мухтавне кăтартнă; вара Унăн вĕренекенĕсем Ăна ĕненнĕ.

12. Çавăн хыççăн Вăл Капернаума кайнă, Унпа пĕрле Ун Амăшĕ, тăванĕсем тата вĕренекенĕсем пынă; унта вара темиçе кун пурăннă.

Христос чиркĕве тасатни тата Унăн пурне те тума ирĕкĕ пуррине кăтартни

13. Иудейсен Пасха праçникĕ çитсе килнĕ вăхăтра, Иисус Иерусалиме пынă.

14. Вăл, чиркӳре вăкăрсем, сурăхсем, кăвакарчăнсем тата укçа улăштарса ларакансене курнă.

15. Вара кантăраран пушă тунă та, пурне те вăкăрĕ сурăхĕ мĕнĕпех чиркӳрен хăваласа кăларнă, укçа улăштаракансен укçисене сапса ярса, вĕсен сĕтелĕсене тӳнтере-тӳнтере янă;

16. Унтан кăвакарчăн сутакансене каланă: ”Илĕр

вĕсене кунтан, Манăн Атте çуртне суту-илӳ çурчĕ ан тăвăр", — тенĕ.

17. Çавăн чух унăн вĕренекенĕсем: "Санăн çуртушăн тăрăшни типĕтсе ячĕ Мана", — тесе çырнине аса илнĕ. *(Псал. 68:10)*.

18. Çавна курсан Иудейсем Ăна каланă: "Çапла тума ирĕкӳ пурринe, Эсĕ пире мĕнле паллăсем кăтартса пĕлтерĕн?" — тенĕ.

Христос вилсе, унтан виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе тăрасси çинчен малтанах каласа хуни

19. Иисус вĕсене хирĕç тавăрса каланă: "Эсир çак чиркĕве пăсăр, Эпĕ ăна виçĕ кунра çĕнĕрен туса лартăп", — тенĕ.

20. Çавна хирĕç Иудейсем каланă: "Ку чиркĕве хĕрĕх ултă çул тунă, Эсĕ ăна виçĕ кунрах туса лартăн-и?" — тенĕ.

21. Чикрӳ тесе Вăл Хăйĕн Ӳчĕ çинчен каланă.

22. Иисус вилĕмрен чĕрĕлсе тăрсан, вĕренекенĕсем Вăл çакна каланине аса илнĕ те Çырăва та, Иисус каланă сăмахсене те ĕненнĕ.

23. Вăл Иерусалимре Пасха праçникĕнче пулнă чух, Вăл тунă хăватсене курсан нумайăшĕ Ăна ĕненнĕ.

24. Анчах Иисус Хăй шанман вĕсене, мĕншĕн тесен Вăл пурне те пĕлнĕ.

25. Ăна çын çинчен каласа кăтартни кирлĕ пулман; çын ăшĕнче мĕн пурринe Вăл Хăех пĕлсе тăнă.

3 - мĕш ГЛАВА

Çӳлтен çураласси-пур çыншăн та питĕ кирлĕ

1. **ФАРИСЕЙСЕМ** хушшинче, Иудейсен пĕр пуçлăхĕ Никодим ятлă çын пулнă.

2. Вăл Иисус патне çĕрле пырса, Ăна каланă: "Равви! Эсĕ Турă патĕнчен килнĕ Вĕрентекен иккенне эпир пĕлетпĕр; мĕншĕн тесен Турăпа пĕрле пулмасан, Эсĕ тăвакан хăватсене никам та тума пултараймасть", — тенĕ.

3. Иисус ăна хирĕç каланă: "Чăн-чăнах калатăп сана: кам Çӳлтен çуралмасть, вăл Туррăн Патшалăхне курма пултараймасть", — тенĕ.

4. Никодим Ăна каланă: "Çын пĕр ватăлсан мĕнле çуралма пултарĕ? Вăл хăйĕн амăшĕ ăшне тепĕр хут кĕрсе çуралма пултарать-и вара?" — тенĕ.

5. Иисус хирĕç каланă: "Чăн-чăнах калатăп сана; кам шывран тата Сывлăшран çуралмасть, вăл Туррăн Патшалăхне кĕреймĕ;

6. Ӳтрен çурални ӳтех, Сывлăшран çурални сывлăш.

7. Эпĕ сана: сирĕн Çӳлтен çуралмалла тенĕшĕн, эсĕ ан тĕлĕн.

8. Сывлăш ăçта вĕресси килнĕ, çавăнта вĕрет, ун сассине илтетĕн, анчах вăл ăçтан килнине, ăçталла кайнине пĕлместĕн: Сывлăшран çуралакан çыннăн, кирек камăн та çапла пулать", — тенĕ.

9. Никодим Ăна каланă: "Вăл вара мĕнле пулма пултарать?" — тенĕ.

10. Иисус ăна хирĕç тавăрса каланă: "Эсĕ — Израиле вĕрентекен, çавна та пĕлместĕн-и?

11. Чăн-чăнах калатăп сана: Эпир мĕн пĕлнине калатпăр, мĕн курнине пĕлтеретпĕр, çапах та Эпир каланине эсир йышăнмастăр;

12. Эпĕ сире çĕр çинчине каласа панине те ĕненместĕр пулсан, пĕлĕт çинчине каласан эсир мĕнле ĕненĕр?

13. Пĕлĕт çинче пурăнакан Этем Ывăлĕсĕр пуçне, пĕлĕт çинчен анса, никам та пĕлĕт çине çĕкленмен;

Христоса хĕрес çине пăталанине ĕненни: "Çӳлтен" Турăран çуралма май парать

14. Моисей пушхирте çĕлене çĕкленĕ пек, Этем Ывăлĕн те,

15. Ăна ĕненекенсем пĕри те ан пĕтчĕр, ĕмĕрлĕх пурнăçлă пулччăр тесе, хĕрес çине çĕкленмелле.

16. Турă тĕнчене питĕ юратнă, Хăйĕн пĕртен-пĕр Ывăлне те панă, Ăна ĕненекенсем пĕри те ан пĕтчĕр, ĕмĕрлĕх пурнăçлă пулччăр, тенĕ.

17. Турă, Хăйĕн Ывăлне çĕр çине тĕнчене суд тутăр тесе яман, Ун урлă тĕнче çăлăнтăр тесе янă.

18. Ăна ĕненекен айăплă пулмĕ, Ăна ĕненменни айăпа юлнă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен вăл Туррăн пĕртен-пĕр Ывăлне ĕненмест.

Мĕншĕн Христос патне çынсем пымаççĕ?

19. Айăпа юлни акă мĕнрен килет, тĕнчене Çутă килчĕ, анчах çынсем Çутăран ытла тĕттĕме юратрĕç, мĕншĕн тесен вĕсен ĕçĕсем усал,

20. Усал ĕç тăвакан, кирек кам та çутта юратмасть, хăйĕн ĕçĕсем ан курăнччăр тесе, вăл çутă патне пымасть, мĕншĕн тесен унăн ĕçĕсем усал.

21. Ĕçе тĕрĕс тăвакан, хăйĕн ĕçĕсем куранччăр
тесе çутă патне пырать, мĕншĕн тесен вăл вĕсене
Турра юрăхлă тунă", — тенĕ.
22. Çавăнтан кайран, Иисус Хăйĕн вĕренеке-
нĕсемпе Иудея çĕрне пынă та, унта çынсене шыва
кĕртсе вĕсемпе пĕрле пуранна.

Шыва Кĕртекен Иоанн, Христос çинчен юлашки хут каласа кăтартни

23. Иоанн та Салим патĕнчи Енон шывĕнче шыва
кĕртнĕ, мĕншĕн тесен унта шыв нумай пулнă;
çынсем çавăнта пырса шыва кĕнĕ;
24. Ун чухне Иоанна тĕрмене хупман пулнă.
25. Çавăн чух, Иоаннăн вĕренекенĕсем, Иудей-
семпе тасаласси çинчен тавлашма пуçланă;
26. Вара вĕренекенĕсем Иоанн патне пырса, ăна
каланă: "Равви! Çавă, санпа пĕрле Иордан хĕрринче
пулни, эсĕ Ун çинчен каласа пĕлтерни, авă, Вăл
шыва кĕртет, пурте Ун патне пыраççĕ", — тенĕ.
27. Иоанн вĕсене каланă: "Çӳлтен памасан, çын
хăй нимĕн те тума пултараймасть.
28. Эсир хăвăр та, эпĕ хам çинчен: эп Христос
мар, мана ун умĕнчен анчах янă тесе каланине
илтрĕр.
29. Хĕр çураçнă çын вăл кĕрӳ пулать; кĕрĕвĕн
тусĕ, ун сассине илтсе савăнса хĕпĕртесе тăрать, çав
савăнăç ĕнтĕ манăн пулса çитрĕ;
30. Унăн асла тухмалла, ман кĕçĕне юлмалла.

Христос çинчен пĕлтерекен, питĕ кирлĕ çичĕ чăнлăх

31. Çӳлтен Килекенни пуринчен те аслă; çĕр

çинче çуралнисенчен пурте çёр çинчиех, калаçма та вăл çёр çинчи пек калаçать: пĕлĕтрен Килекенни пуринчен те аслă.

32. Вăл мĕн курни тата мĕн илтни çинчен каласа кăтартать; çапах Вăл каланине никам та йышăнмасть.

33. Вăл каласа кăтартнине йышăнакан, хăй йышăннипе Турă чăннине кăтартса парать.

34. Турă Яни, Çавă Туррăн сăмахĕсене калать; мĕншĕн тесен Турă Ăна Сывлăшне виçесĕр пана.

35. Ашшĕ, Ывăлне юратнипе пурне те Ун аллине панă.

36. Ывăлне ĕненекен ĕмĕрлĕх пурнăçлă пулать; Ывăлне ĕненмен çын ырă курас çук, ун çинче Туррăн çилли тăрать".

4 - мĕш ГЛАВА

Иисус, Самария хĕрарăмне Хăй çинчен уçса пани

1. **ИИСУС** Хăй çинчен: Вăл вĕренекенсем нумай пухса, Иоаннран ытларах шыва кĕртет тенĕ хыпар фарисейсем патне çитнине пĕлсен, —

2. Иисус Хăй шыва кĕртмен, Унăн вĕренекенĕсем кĕртнĕ, —

3. Иудейăран тухса каллех Галилейăна кайнă.

4. Унăн Самария урлă каймалла пулнă.

5. Çапла Вăл Самарийăри Сихарь ятлă хулана пынă, çав хула, Иаков хăйĕн ывăлне Иосифа панă çĕр лаптăкĕ çывăхĕнче пулнă;

6. Унта Иаковăн çăлĕ пулнă. Иисус çул çинче ывăннăскер, çав çăл патне ларнă; ун чух улттăмĕш сехет тĕлĕ пулнă.

7. Самарийăран пĕр арăм шыв ăсма пынă. Иисус ăна каланă: "Мана шыв ĕçме пар", — тенĕ.

8. Унăн вĕренекенĕсем хулана çимелли илме кайнă пулнă.

9. Самария арăмĕ Иисуса каланă:" Эсĕ Иудей çынни мĕнле тата манран, Самария арăмĕнчен ĕçме ыйтатăн? Иудей çыннисем Самария çыннисемпе хутшăнмаççĕ вĕт", — тенĕ.

10. Иисус ăна хирĕç каланă: "Эсĕ Туррăн ырлăхне пĕлнĕ пулсан, хăвăнтан: "Мана ĕçме пар", — тесе Кам ыйтнине пĕлсен, ху Унран ыйтнă пулăттăн, вара Вăл сана чĕрĕлĕх шывĕ парĕччĕ", — тенĕ.

11. Арăм Ăна каланă: "Ырă çын! Санăн ăсмалли нимĕн те çук, ку çăл тарăн: чĕрĕлĕх шывне Эсĕ ăçтан илĕн?

12. Эсĕ вара, пире çак çăла алтса панă Иаков аттемĕртен те аслă-и? Вăл хăй те, унăн ачисем те, выльăх-чĕрлĕхĕ те çак çăлран ĕçсе пурăннă", —тенĕ.

13. Иисус ăна хирĕç каланă: "Çак шыва ĕçекенĕн кирек камăн та татах ĕçесси килет;

14. Эпĕ паракан шыва кам ĕçет, унăн ĕмĕрех ĕçесси килмĕ; Эпĕ паракан шыв ун ăшĕнче, ĕмĕрлĕх пурнăçалла юхакан шывăн çăлĕ пvлса тăрĕ", —тенĕ.

15. Арăм Ăна каланă: "Ырă çын! Çав шыва мана парсам, манăн ĕçес ан килтĕрччĕ, çакăнта шыв ăсма та килмелле ан пултăрччĕ", — тенĕ.

16. Иисус ăна каланă: "Кайса хăвăн упăшкуна кунта чĕнсе кил", — тенĕ.

17. Арăм хирĕç каланă: "Манăн упăшкам çук", — тенĕ. Иисус арăма каланă: "Упăшкам çук тесе эсĕ тĕрĕс каларăн;

18. Санăн пилĕк упăшкаччĕ, халĕ пурăнаканни санăн упăшку мар, эсĕ çавна тĕрĕс каларăн", — тенĕ.

19. Арăм Ăна каланă: "Эй, Вĕрентекен! Ĕнтĕ

пĕлетĕп, Эсĕ пророк;

20. Пирĕн аттесем Турра çак ту çинче пуççапнă; эсир калатăр, пуççапса пурăнмалли вырăн Иерусалимре тетĕр", — тенĕ.

21. Иисус ăна каланă: "Ĕнен Мана, вăхăт çитет ĕнтĕ, Аттене çак ту çинче е Иерусалимре анчах пуççапмăр;

22. Эсир хăвăр мĕне пуççапнине пĕлместĕр; эпир хамăр мĕне пуççапнине пĕлетпĕр, çăлăнăç Иудейсенчен тухмалла;

23. Вăхăт çитĕ, çитрĕ те ĕнтĕ, тĕрĕс пуççапакансем Аттене сывлăшпа, чăнлăхпа пуççапĕç, Атте Хăйне валли çавăн пек пуççапакансене шырать:

24. Турă Вăл сывлăш, Ăна пуççапакансен те сывлăшпа, чăнлăхпа пуççапмалла", — тенĕ.

25. Арăм Ăна каланă: "Христос текен Мессия килмеллине эпĕ пĕлетĕп; Вăл килсен, пире пĕтĕмпех каласа пĕлтерĕ", — тенĕ.

26. Иисус арăма каланă: "Вăл Эпĕ, санпа Калаçакан", — тенĕ.

27. Çав вăхăтра Унăн вĕренекенĕсем таврăннă та, Вăл арăмпа калаçнинчен питĕ тĕлĕннĕ; çапах пĕри те: "Эсĕ унран мĕн ыйтатăн, мĕн çинчен унпа калаçатăн?" — тесе каламан.

28. Арăм вара шыв савăтне лартса хăварнă та, хулана кайса çынсене каланă:

29. "Кайса пăхăр-ха, пĕр Çын мана, эпĕ хам пурнăçра мĕн тунине пĕтĕмпех каласа пачĕ: Вăл Христос мар-ши?" — тенĕ.

30. Çынсем хуларан тухса Ун патне кайнă.

31. Çав хушăра вĕренекенĕсем Ăна каланă: "Равви! çи", — тенĕ.

32. Вăл вĕсене каланă: "Манăн эсир пĕлмен çи-

мелли пур", — тенĕ.

33. Çавăнпа вĕренекенĕсем пĕр-пĕрне каланă: "Кам та пулин Ун валли çимелли илсе килнĕ-ши вара?" — тенĕ.

34. Иисус вĕсене каланă: "Манăн çимелли вăл, Мана Яраканăн ирĕкне тăвасси тата Унăн ĕçне туса çитересси.

35. Тырă вырас вăхăт тата тăватă уйăхран çитет тесе каламастăр-и эсир? Эпĕ калатăп сире: куçăрсене уçса тырă пуссинелле пăхăр-ха? Тырă мĕнле шуралса çитсе вырмалла пулнă.

36. Выраканĕ ĕмĕрлĕх пурнăç валли çимĕç пуçтарса хăйне тивĕçлине илет, çапла вара акаканĕ те, выраканĕ те пĕрле савăнĕç;

37. Ку тĕлĕшрен: "Пĕри акать, тепри вырать" — тесе калани тĕрĕс.

38. Эпĕ сире, хăвăр ĕçлесе акманнине вырма ятăм: ыттисем ĕçлерĕç, эсир вĕсен ĕçне хутшăнтăр", — тенĕ.

39. Арăм хăй мĕн тунине, пурне те Иисус ăна каласа панине халăха пĕлтерсен, vн сăмахĕ тăрăх çав хулари Самария çыннисем нумайăшĕ Иисуса ĕненнĕ.

40. Çавăнпа та Самария çыннисем Иисус патне пырсан, Ăна хăйсем патне пыма ыйтнă; Вăл вара унта икĕ кун пурăннă.

41. Унăн сăмахĕ тăрăх тата нумай çын ĕненнĕ.

42. Вĕсем вара çав арăма каланă: "Ĕнтĕ сан сăмахху тăрăх кăна ĕненместпĕр, Вăл чăнах та тĕнчене Çăлакан Христос иккенне, хамăр илтсе пĕлтĕмĕр", — тенĕ.

Патша умĕнче тăракан çыннăн ывăлне сыватни — Христос Турă иккенне пĕлтерекен паллă

43. Икĕ кун иртсен, Вăл унтан тухса Галилейăна кайнă;

44. Пророка хăй çуралнă çĕршывра хисеплемеççĕ тесе, Иисус Хăех каласа кăтартнă.

45. Вăл Галилейăна пырсан, Галилея çыннисем, Иерусалимри праçникре Иисус мĕн тунине пурне те курнăскерсем Ăна йышăннă, — праçнике вĕсем те кайнă пулнă.

46. Çапла Иисус каллех, шывран эрех тунă çĕре, Галилейăри Кана хулине пынă. Капернаумра патша умĕнче тăракан çыннăн ывăлĕ чирлĕ выртнă пулнă.

47. Иисус Иудейăран Галилейăна пынине илтсен, вăл Ун патне пынă та, Ăна хăйĕн вилес пек выртакан ывăлне пырса сыватма тархаспанă.

48. Иисус ăна каланă: "Эсир паллăсем, хăватсем курмасăр та ĕненместĕр", — тенĕ.

49. Патша умĕнче тăракан çын Ăна каланă: "Эй, Вĕрентекен! Ывăлăм виличчен пырсам", — тенĕ.

50. Иисус каланă: "Каях ĕнтĕ, санăн ывăлу сывалчĕ", — тенĕ. Вăл вара Иисус хăйне каланă сăмаха ĕненсе кайнă.

51. Çул çинче тарçисем ăна хирĕç пулса каланă: "Санăн ывăлу сывалчĕ", — тенĕ.

52. Вăл вĕсенчен: "Хăш сехетре ăна çăмăл пулчĕ?" — тесе ыйтнă. Лешсем каланă:" "Ĕнер, çиччĕмĕш сехетре сивчир унран кайрĕ", — тенĕ.

53. Çакăнтан ача ашшĕ, Иисус хăйне: "Санăн ывăлу сывалнă" — тесе калани çав сехетре пулнине пĕлнĕ. Вара хăй те, унăн пĕтĕм килйышĕ те Иисуса ĕненнĕ.

54. Çак иккĕмĕш тĕлĕнмелле ĕçе Иисус, Иудейăран Галилейăна таврăнсан тунă.

5 - мĕш ГЛАВА

Халран кайнă çынна сыватни.

1. **ÇАВĂН** хыççăн Иудейсен праçникĕ, çитнĕ, Иисус та Иерусалиме пынă.

2. Иерусалимре Сурăх хапхи патĕнче шыва кĕмелли вырăн пур, ăна еврейле Вифезда *(хĕрхенӳ çурчĕ)* теççĕ, унта тăррине витсе тунă кĕрсе тухмалли пилĕк çул пулнă:

3. Çавăнта темĕн чухлĕ чирлĕ çынсем, суккăррисем, уксаххисем, алли-ури типнисем шыв пăлханасса кĕтсе выртнă;

4. Мĕншĕн тесен, Туррăн Ангелĕ вăхăтăн-вăхăтăн шыва кĕмелли вырăна анса шыва пăлхатнă, шыв пăлханнă вăхăтра кам унта малтан кĕнĕ, çавă мĕнле чирпе асаплансан та сывалнă.

5. Çавăнта вăтăр сакăр çул чирпе асапланакан çын пулнă.

6. Иисус ăна курсан, вăл питĕ нумай вăхăт чирлĕ выртнине пĕлсе ăна каланă: "Санăн сывалас килет-и?" — тенĕ.

7. Чирлĕ çын Ăна хирĕç каланă: "Вĕрентекен, сывалас килет, анчах та шыв пăлахансан, мана шыва кĕртекен çын çук; эпĕ пынă çĕре, манран малтан тепри кĕрсе ĕлкĕрет".

8. Иисус ăна каланă: "Тăр, хăвăн вырăнна ил те çӳре", — тенĕ.

9. Вăл çавăнтах сывалнă та хăйĕн вырăнне илсе кайнă. Çак ĕç шăматкун пулнă.

10. Çавăнпа Иудейсем сывалнă çынна каланă: "Паян шăматкун, санăн вырăнна илме юрамасть", — тенĕ.

11. Вăл вĕсене каланă: ”Хама Сыватакан мана, хăвăн вырăнна ил те, çӳре тесе каларĕ”, — тенĕ.

12. Унран вĕсем ыйтнă: ”Сана, вырăнна ил те çӳре тесе калакан Çын, кам Вăл?” — тенĕ.

13. Сывалнă çын, Вăл камне пĕлмен, мĕншĕн тесен Иисус çавăнта тăракан халăх хушшине кĕрсе курăнми пулнă.

14. Кайран Иисус ăна чиркӳре тĕл пулса каланă: ”Акă, эсĕ сывалтăн; урăх çылăха ан кĕр, сана тата усалрах ан пултăр”, — тенĕ.

15. Çав çын Иудейсем патне кайнă та: ”Мана сыватакан Иисус” — тесе каласа кăтартнă.

16. Иудейсем вара, çавăн пек ĕçсене шăматкун тунăшăн Иисуса хăвалама пуçланă; Ăна вĕлерме май шыранă.

Иисус—”Турăпа пĕр танлă”

17. Иисус вĕсене каланă: ”Манăн Аттем Хăйĕн ĕçне ку таранччен тăвать, Эпĕ та тăватăп”, — тенĕ.

18. Иудейсем вара Иисуса шăматкуна хисеплеменнишĕн анчах мар, Турра Хăйĕн Ашшĕ тесе, Хăйне Турăпа пĕр тана хунăшăн вĕлересшĕн пулса тата ытларах май шыранă.

19. Çавна хирĕç Иисус каланă: ”Чăн-чăнах калатăп сире; Ашшĕ тунине курмасан, Ывăлĕ Хăй тĕллĕн нимĕн те тума пултараймасть; Ашшĕ мĕн тăвать, Ывăлĕ те çавнах тăвать,

20. Мĕншĕн тесен Ашшĕ Ывăлне юратать, Хăй мĕн тунине пурне те Ăна кăтартать; çаксенчен те пысăк ĕçсем Ăна кăтартĕ, эсир вара тĕлĕнĕр.

21. Ашшĕ вилнисене чĕртсе пурнăç панă пек, Ывăлĕ те чĕртес тенине чĕртет.

22. Ашшĕ никама та суд тумасть, суд тăвассине

Вăл пĕтĕмпех Ывăлне панă.

23. Ашшĕне хисепленĕ пек, Ывăлне те пурте хисеплеччĕр, тенĕ. Ывăлне хисеплеменни, Ăна Яракан Ашшĕне те хисеплемест.

24. Чăн-чăнах калатăп сире; Ман сăмаха итлесе, мана Яракана ĕненекен ĕмĕрлĕх пурнăçлă пулать; вăл суда пымасть, вилĕрмен чĕрĕлĕхе куçать.

25. Чăн-чăнах калатăп сире; вăхăт çитет, çитрĕ те ĕнтĕ, вилнĕ çынсем Турă Ывăлĕн сассине илтĕç, илтсессĕн чĕрĕлсе тăрĕç.

26. Ашшĕн мĕнле Хăй ăшĕнче чĕрĕлĕх пурнăç пур, çавăн пекех Ывăлĕн ăшне те чĕрĕлĕх пурнăç панă;

27. Вăл Этем Ывăлĕ, çавăнпа суд тума та Ăна ирĕк панă.

28. Çакăншăн ан тĕлĕнĕр: вăхăт çитет ĕнтĕ, тупăкра выртакансем пурте Турă Ывăлĕн сассине илтĕç;

*29. Ырă тунисем ĕмĕрех савăнса пурăнма чĕрĕлсе тăрĕç, усал ĕç тvнисем айăпа юлма чĕрĕлсе тăрĕç.

30. Хам тĕллĕн Эпĕ нимĕн те тума пултараймастăп. Мĕнле илтетĕп, çапла суд тăватăп; Эпĕ суд туни тĕрĕс, мĕншĕн тесен Хамăн ирĕке шырамастăп, Мана Яракан Аттен ирĕкне тăватăп.

31. Эпĕ, Хам çинчен Хамах каласа пĕлтеретĕп пулсан, Эпĕ калани чăн пулмĕччĕ:

Христос çинчен каласа пĕлтерекен

32. Ман çинчен каласа пĕлтерекен урăххи пур: Эпĕ пĕлетĕп, вăл Ман çинчен каласа пĕлтерни чăн;

33. Эсир Иоанн патне ятăр, вăл вара чăнлăх çинчен каласа пĕлтерчĕ.

34. Анчах Мана, Хам çинчен çын каласа пĕлтерни кирлĕ мар, çакна Эпĕ сире çăласшăн калатăп.

35. Иоанн вăл, çунса çутатакан çутă пулнă; эсир ун çуттинче кăшт анчах савăнса тăрасшăн пултăр.

36. Ман çинчен Иоаннран ытларах пĕлтерекен пур; Атте Мана тума панă ĕçсем, çак Эпĕ тăвакан ĕçсем Ман çинчен, Мана Атте янине пĕлтерсе тăраççĕ.

37. Мана Яракан Атте, Ман çинчен Хăй каласа пĕлтерчĕ. Эсир Ун сассине нихăçан та илтмен, Унăн Сăнне те курман.

38. Унăн сăмахне те хăвăр ăшăрта тытмастăр, мĕншĕн тесен эсир Вăл Янине ĕненместĕр.

39. Çырăва тишкерсе пăхăр, ун урлă эсир ĕмĕрлĕх пурнăç тупма шухăшлатăр; вăл Ман çинчен пĕлтерет.

40. Анчах та, ĕмĕрлĕх пурнăç илме эсир Ман пата килесшĕн мар.

41. Эпĕ çынсем мухтанине йышăнмастăп.

42. Эпĕ сире пĕлетĕп; сирĕн ăшăрта Турра юратас кăмăл çук.

43. Эпĕ, Хамăн Аттен ячĕпе килтĕм, çавăнпа та Мана йышăнмастăр; тепри хăйĕн ячĕпе килсен, ăна йышăнатăр.

44. Эсир пĕр-пĕрне мухтаса пурăнатăр пулсан, Туррăн мухтавне шырамасан епле ĕненĕр?

45. Ман çинчен эсир, Ашшĕ умĕнче пире айăплĕ тесе ан шухăшлăр; сире айăплама хăвăр шанса тăракан Моисей пур.

46. Моисее ĕненнĕ пулсан, эсир Мана та ĕненнĕ пулăттăр, мĕншĕн тесен вăл Ман çинчен çырнă.

47. Вăл çырнине ĕненместĕр пулсан, Ман сăмахсене мĕнле ĕненĕр?”

6 - мӗш ГЛАВА

Пилӗк пин ҫынна тӑрантарни

1. **ИИСУС** ҫавӑн хыҫҫӑн, Галилейӑри Тивериада тинӗсӗн тепӗр енне кайнӑ;

2. Ун хыҫӗнчен темӗн чухлӗ халӑх пынӑ, мӗншӗн тесен вӗсем, Вӑл чирлисене сыватса хӑватсем тунине курнӑ.

3. Иисус ту ҫине хӑпарнӑ та, унта Хӑйӗн вӗренекенӗсемпе ларнӑ.

4. Иудӗйсен Пасха праҫникӗ ҫывхарса килнӗ.

5. Иисус пуҫне ҫӗклесе пӑхнӑ та, Хӑй патне темӗн чухлӗ халӑх пынине курса, Филиппа каланӑ: "Вӗсене тӑрантармаллӑх пирӗн ҫӑкӑр ӑҫтан сутӑн илмелле-ши?" — тенӗ.

6. Ҫакна Вӑл Филиппа сӑнаса каланӑ, мӗншӗн тесен Хӑй мӗн тӑвассине, Вӑл пӗлсе тӑнӑ.

7. Филипп Ӑна хирӗҫ каланӑ: "Пурне те пӗр тан тивтӗр тесен те, вӗсене икҫӗр динарийлӗх ҫӑкӑр ҫитес ҫук", — тенӗ.

8. Унӑн вӗренекенӗсенчен пӗри, Петр текен Симон шӑллӗ Андрей Ӑна каланӑ:

9. "Кунта пӗр ачан пилӗк урпа ҫӑкӑрӗпе икӗ пӗчӗк пулӑ пур, анчах ҫакӑн чухлӗ нумай халӑха мӗн вӑл?" — тенӗ.

10. Иисус каланӑ: "Вӗсене ларма хушӑр", — тенӗ. Ҫав вырӑнта ҫерем нумай пулнӑ. Ҫапла вара пӗр пилӗк пин ҫынна яхӑн ларса тухнӑ.

11. Иисус ҫӑкӑрсене илсе Турра тав тунӑ та, вӗренекенӗсене панӑ, вӗренекенӗсем ларакан халӑха валеҫсе панӑ; пуллине те кам мӗн чухлӗ ҫиес тенӗ,

çавăн чухлĕ панă.

12. Çисе тăрансан, Хăйĕн вĕренекенĕсене каланă: ”Юлнă татăксене пуçтарăр, нимĕн те сая ан кайтăр”, — тенĕ.

13. Пилĕк урпа çăкăрне çиекенсенчен юлнă татăксене пуçтарса, вуникĕ кунтă туллиех тултарнă.

14. Иисус тунă хăвата куракансем çавăн чух каланă: ”Ку чăнах та тĕнчене килмелли Пророк”, — тенĕ.

Христосăн малтанхи тĕлĕнмелле ĕçĕсем — шыв çинче утни

15. Çынсем Ăна систермесĕр тытса патша тăвас тенине илтсен, Иисус каллех ту çине пĕчченех кайнă.

16. Каç пулсан Унăн вĕренекенĕсем тинĕс хĕррине аннă,

17. Унтан кимĕ çине ларса тинĕсĕн тепĕр енне Капернаума кайнă. Тĕттĕмленсе çитнĕ, анчах Иисус вĕсем патне пыман.

18. Çил хытă вĕрнипе тинĕс хумханса тăнă.

19. Пĕр çирĕм пилĕк е вăтăр стадийăна яхăн ишсе кайсан вĕсем, Иисус тинĕс çинче утса пынине тата Вăл кимĕ патне çывхарнине курсан, хăраса кайнă.

20. Вăл вĕсене каланă: ”Ку Эпĕ, ан хăрăр”, — тенĕ.

21. Вĕсем Ăна кимĕ çине лартасшăн пулнă; çав вăхăтрах кимми хăйсем ишсе пыракан çыран хĕррине çитсе чарăннă.

Христос — Чĕрĕлĕх Çăкăрĕ

22. Тепĕр кунне, тинĕс леш енче тăракан халăх, Иисусăн вĕренекенĕсем кĕнĕ кимĕрен пуçне унта

урăх кимĕ пулманнине тата Хăйĕн вĕренекенĕсемпе Иисус кимĕ çине кĕменнине, вĕренекенĕсем хăйсем анчах ларса кайнине пĕлнĕ.

23. Çав вăхăтра, Иисус пиллесе панă çăкăра çинĕ вырăн çывăхне Тивериадăран урăх кимĕсем пынă;

24. Çапла вара, Иисус та Унăн вĕренекенĕсем те унта çуккине пĕлсен, халăх кимĕсем çине ларнă та, Иисуса шыраса Капернаума ишсе пынă.

25. Вара Ăна тинĕсĕн тепĕр енче тупса каланă: "Равви, Эсĕ кунта хăçан килтĕн?" — тенĕ.

26. Иисус вĕсене хирĕç каланă: "Чăн-чăнах калатăп сире, эсир Мана хăватсем курнăран шырамастăр, çăкăр çисе тăраннăран шыратăр.

27. Çĕрекен çимеллишĕн ан тăрăшăр, ĕмĕрлĕх пурнăç паракан çимеллишĕн тăрăшăр, çавна сире Этем Ывăлĕ паратъ; мĕншĕн тесен Атте Турă, Ун çине Хăйĕн *(пичетне)* паллине хунă".

28. Вара Ăна каланă: "Турă ĕçне тăвас тесен, пирĕн мĕн тумалла?" — тенĕ.

29. Иисус вĕсене каланă: "Акă Турă ĕçĕ, Вăл Кама янă, эсир Çавна ĕненĕр", — тенĕ.

30. Çакна хирĕç Ăна каланă: "Эпир курса Сана ĕненме, Эсĕ пире мĕнле паллăсем кăтартăн, мĕнле хăват тăвăн?

31. Пирĕн аттесем пушхирте маннă çинĕ, ун çинчен çапла çырнă: "Пĕлĕт çинчен вĕсене çимелли çăкăр панă", — тенĕ. *(Псал. 77:24)*

32. Иисус вĕсене каланă: "Чăн-чăнах калатăп сире: Моисей пĕлĕт çинчен сире çăкăр паман, чĕрĕлĕх çăкăрне сире Манăн Атте пĕлĕт çинчен паратъ;

33. Туррăн çăкăрĕ Çавă ĕнтĕ, Вăл пĕлĕт çинчен анса тĕнчене чĕрĕлĕх пурнăç паратъ".

34. Вĕсем Ăна каланă: "Вĕрентекен! Эсĕ пире

яланах çавăн пек çăкăр парса тăр", — тенĕ.

35. Иисус вĕсене каланă: "Чĕрĕлĕх Çăкăрĕ Эпĕ; Ман пата килекенĕн нихăçан та çиесси килмĕ, Мана ĕненекенĕн нихăçан та ĕçесси килмĕ.

36. Эпĕ ĕнтĕ сире каларăм, эсир Мана куртăр, çапах ĕненместĕр.

37. Атте Мана панисем пурте Ман пата килĕç, Ман пата килекенсене Эпĕ никама та хăваласа ямастăп.

38. Мĕншĕн тесен Эпĕ пĕлĕт çинчен Хамăн ирĕке тума анман, мана Яракан Аттен ирĕкне тума аннă.

39. Мана Яракан Аттен ирĕкĕ ак çакă; Вăл Мана панисенчен пĕрне те çухатмалла мар, юлашки кун пурне те вилĕмрен чĕртсе тăратмалла.

40. Мана Яраканăн ирĕкĕ ак çапла; Ывăлне курса тата Ăна ĕненсе тăракан кирек кам та ĕмĕрлĕх пурнăçлă пулать. Эпĕ ăна юлашки кун чĕртсе тăратăп", — тенĕ.

41. Эпĕ пĕлĕт çинчен аннă çăкăр тенĕшĕн, Иудейсем Иисуса ÿпкелесе каланă:

42. "Ку, Иосиф Ывăлĕ Иисус мар-и вара? Эпир Унăн ашшĕпе амăшне те пĕлетпĕр, мĕнле тата Вăл: "Эпĕ пĕлĕт çинчен аннă тесе калать?" — тенĕ.

43. Иисус вĕсене хирĕç каланă: "Хăвăр хушшăрта ÿпкелешсе ан калаçăр.

44. Мана Яракан Атте илсе пымасан, Ман пата никам та килеймĕ; Ман пата килекене Эпĕ юлашки кун чĕртсе тăратăп.

45. Пророксен кĕнекинче çапла çырнă: "Турă пурне те вĕрентсе çитерĕ", — тенĕ. Аттерен илтсе вĕренекен кирек кам та Ман пата килет. *(Исаий 54:13)*

46. Ку вăл, кам та пулин Аттене курнă тени пул-

масть; Тураран Килнисĕр пуçне Ашшĕне никам та курман, Вăл Ашшĕне курнă.

47. Чăн-чăнах калатăп сире; Мана ĕненекен ĕмĕрлĕх пурнăçлă пулать.

48. Эпĕ чĕрĕлĕх Çăкăрĕ.

49. Сирĕн аçăрсем пушхирте маннă çисен те вилнĕ.

50. Пĕлĕт çинчен анакан çăкăр çавнашкал, ăна çиекен никам та вилмест.

51. Эпĕ çӳлтен аннă, чĕрĕлĕх Çăкăрĕ: çав çăкăра çиекен ĕмĕрех пурăнĕ; Эпĕ паракан çăкăр, вăл Манăн Ӳт, Эпĕ ăна тĕнчене çăласшăн паратăп", — тенĕ.

52. Вара Иудейсем, хăйсем хушшинче тавлашма пуçланă: "Вăл мĕнле Хăйĕн Ӳтне пире çиме парĕ?" — тенĕ вĕсем.

53. Иисус вĕсене каланă: "Чăн-чăнах калатăп сире: эсир Этем Ывăлĕн Ӳтне çимесен, Унăн Юнне ĕçмесен, сирĕн ăшăрта чĕрĕлĕх пулмĕ;

54. Манăн Ӳте çиекен, Ман Юна ĕçекен ĕмĕрлĕх пурнăçлă пулать, Эпĕ ăна юлашки кун чĕртсе тăратăп;

55. Мĕншĕн тесен Манăн Ӳтĕм чăн çимĕç, Манăн Юнăм чăн та чуншăн ĕçмелли япала;

56. Манăн Ӳте çиекен, Ман Юна ĕçекен, Ман ăшра тăрать, Эпĕ те ун ăшĕнче тăратăп;

57. Мана чĕрĕ Атте ячĕ, Эпĕ Аттепе пурăнатăп, çапла Манăн Ӳте çиекен те Манпа пурăнĕ;

58. Пĕлĕт çинчен аннă çăкăр çавă ĕнтĕ; сирĕн аçăрсем çинĕ маннă пек мар вăл, вĕсем вилнĕ: çак çăкăра çиекен ĕмĕрех пурăнĕ".

59. Çакна Вăл Капернаумра, синагогăра вĕрентнĕ чухне каланă.

60. Çавна илтсен, Унăн вĕренекенĕсенчен нумайăшĕ каланă :"Темĕнле сăмахсем калать Вăл, çав-

на кам итлесе тăрĕ?" — тенĕ.

61. Вĕренекенĕсем çавăншăн ўпкелешнине Хăй ăшĕнче пĕлсе, Иисус вĕсене каланă: "Сире çав та иккĕлентерет-и?

62. Этем Ывăлĕ Хăй малтан пулнă вырăна çĕкленнине курсан, эсир тата мĕн калăр?

63. Сывлăш чĕрĕлĕх паратъ, ўт пĕртте усă памасть; Эпĕ сире каланă сăмахсем, Сывлăшпа чĕрĕлĕх;

64. Çапах сирĕн хушшăрта ĕненменнисем те пур", — тенĕ. Иисус малтанах, кам ĕненменнине тата Хăйне кам тытса парассине пĕлнĕ.

65. Вара Вăл каланă: "Эпĕ сире çавăнпа каларăм, Манăн Атте уçса памасан, Ман пата никам та килме пултараймĕ", — тенĕ.

66. Çавăн хыççăн Унăн вĕренекенĕсем нумайăшĕ Ăна пăрахса кайнă, вара вĕсем урăх Унпа çўремен.

Петр хăй ĕненни çинчен çирĕппĕн калани

67. Çавăн чух Иисус, вуникĕ вĕренекенне каланă: "Эсир те Мана пăрахса каясшăн мар-и?" — тенĕ.

68. Петр текен Симон Ăна каланă: "Эй, Вĕрентекен! Кам патне каяс пирĕн? Санра ĕмĕрлĕх пурнăç сăмахĕсем.

69. Эсĕ чĕрĕ Туррăн Ывăлĕ-Христос иккенне эпир ĕнентĕмĕр те, пĕлтĕмĕр те", — тенĕ.

70. Иисус вĕсене каланă: "Эпĕ сире вуникĕ çын суйласа илмерĕм-и? Анчах та сирĕнтен пĕри шуйттан".

71. Çакна Вăл, Симон ывăлĕ Иуда Искариот çинчен каланă, мĕншĕн тесен çавă вуникĕ вĕренекенĕсенчен пĕри, Иисуса тытса парасшăн пулнă.

7 - мĕш ГЛАВА

Иисус чатăр кармалли праçник вăхăтĕнче вĕрентни

1. **ÇАВĂНТАН** кайран Иисус Галилейăра çӳренĕ, Иудейсем Ăна вĕлерме шыранă пирки, Вăл Иудейăра çӳресшĕн пулман.

2. Иудейсен-чатăр кармалли праçникĕ çывхарса килнĕ.

3. Çавăн чух Иисусăн тăванĕсем Ăна каланă: "Эсĕ кунтан Иудейăна тухса кай, Эсĕ тăвакан ĕçсене Санăн вĕренекенӳсем те курччăр;

4 Паллă çын пулас тесен никам та, нимĕн те вăрттăн тумасть; Эсĕ çав тери хăватлă ĕçсем тăватăн пулсан, Хăвна тĕнчене кăтарт", — тенĕ.

5. Иисуса Хăйĕн тăванĕсем те ĕненмен.

6. Çавна хирĕç Иисус вĕсене каланă: "Манăн вăхăт çитмен-ха, сирĕншĕн яланах вăхăт;

7. Тĕнче сире кураймасăр тăма пултараймасть, Мана вăл кураймасть, мĕншĕн тесен Эпĕ ун ĕçĕсем усаллине каласа кăтартатăп;

8. Эсир ку праçнике кайăр, Эпĕ халь çак праçнике каймастăп, мĕншĕн тесен Манăн вăхăт çитмен-ха", — тенĕ.

9. Вĕсене çакна каласан, Хăй Галилейăрах юлнă.

10. Унăн тăванĕсем праçнике пырсан, Вăл та унта курăнмасăр, вăрттăн пынă.

11. Иудейсем праçникре: "Вăл ăçта-ши?" тесе, Ăна шыранă.

12. Халăх хушшинче Ун çинчен тĕрлĕрен калаçнă; пĕрисем: "Вăл ырă" — тенĕ. Теприсем каланă: "Çук! Вăл халăха улталать", — тенĕ.

13. Анчах Иудейсенчен хăраса, пĕри те Ун ҫинчен усăмлă каламан.

14. Шăпах ҫур праҫник вăхăтĕнче, Иисус чиркĕве кĕрсе вĕрентме пуҫланă.

15. Иудейсем тĕлĕнсе каланă: "Вăл вĕренмесĕрех Ҫырăва мĕнле пĕлет-ха?" — тенĕ.

16. Иисус вĕсене хирĕҫ каланă: "Эпĕ вĕрентни--Манăн мар, Мана Яраканăн;

17. Кам Унăн ирĕкне тăвас тет, вăл ҫак вĕрентĕве пĕлĕ, Турăран-и вăл, е Эпĕ ăна Хамран калатăп.

18. Хăйĕнчен калакан хăйне валли мухтав шырать; кам Хăйне Яракан валли мухтав шырать, Вăл тĕрĕс, Унра ултавлăх ҫук.

19. Сире Моисей закон паман-и? Ҫапах та эсир пĕри те закона тытса тăмастăр. Мĕншĕн Мана вĕлерме шыратăр?" — тенĕ.

20. Халăх Ăна хирĕҫ каланă: "Санăн ăшăнта шуйттан мар-и? Кам Сана вĕлерме шырать?" — тенĕ.

21. Иисус вĕсене татах каланă: "Эпĕ пĕр ĕҫ турăм та, эсир пурте тĕлĕнетĕр;

22. Моисей сире ўт кастарма хушнă, — анчах вăл йăла Моисейрен мар, аҫăрсенчен тухнă, — ҫавăнпа эсир шăматкун та ҫын ўтне касатăр.

23. Моисей законне пăсас мар тесе, ҫын хăйĕн ўтне шăматкун кастарать пулсан, — Эпĕ шăматкун ҫынна чирĕнчен пĕтĕмпех сыватнăшăн, Ман ҫине ҫилленетĕр-и?

24. Ҫиелтен пăхса ан айăплăр, тĕрĕс суд туса айăплăр", — тенĕ.

25. Ҫавăн чух Иерусалим ҫыннисенчен хăшпĕрисем каланă: "Ҫакна, вĕлерессшĕн шырамаҫҫĕ-и?

26. Акă, Вăл кĕретех калаçать, Ăна нимĕн те каламаççĕ; Вăл чăнах та Христос иккенне пуçлăхсем пĕлсе çитмен-ши?

27. Анчах Вăл ăçтан иккенне эпир пĕлетпĕр; Христос килсен, Вăл ăçтан иккенне никам та пĕлмĕ", — тенĕ.

28. Çавăн чух Иисус чиркÿре вĕрентсе хыттăн каланă: "Эсир Мана пĕлетĕр, Эпĕ ăçтан килнине те пĕлетĕр; Эпĕ Хам тĕллĕн килмен, Мана Яракан чăн, эсир Ăна пĕлместĕр;

29. Эпĕ Ăна пĕлетĕп, мĕншĕн тесен Эпĕ Ун патĕнчен килнĕ, Вăл Мана ячĕ", — тенĕ.

30. Вĕсем Иисуса тытасшăн пулнă, çапах Ун çине аллине хуман, мĕншĕн тесен Унăн вăхăчĕ çитмен.

31. Халăх хушшинчен нумайăшĕ Ăна ĕненсе каланă: "Христос килсен, Ку тунă хăватсенчен те ытларах хăватсем тăвĕ-ши вара?" — тенĕ.

32. Халăх хушшинче Ун çинчен çапла калаçнине фарисейсем илтсен, хăйсен тарçисемпе пуп-пуçлăхĕсен тарçисене Иисуса тытма янă.

33. Иисус вĕсене каланă: "Манăн сирĕнпе пĕрле нумаях пулмалла мар ĕнтĕ, Эпĕ Хама Яракан патне каятăп;

34. Мана шырасан та тупаймăр; Эпĕ каякан çĕре эсир пыраймăр", — тенĕ.

35. Вара Иудейсем пĕр-пĕрне каланă: "Эпир тупмалла мар çĕре Вăл ăçта каять-ши? Саланса кайнă Еллинсем патне кайса, Вăл Еллинсене вĕрентесшĕн мар-ши?

36. Мана шырасан та тупаймăр; Эпĕ каякан çĕре эсир пыраймăр, тенĕ сăмахсем тата Унăн мĕне пĕлтереççĕ-ши?" — тенĕ.

37. Аслă праçникĕн юлашки кунĕнче, Иисус тăрса хытă сасăпа каланă:" Камăн ĕçес килет, Ман

пата килсе ĕçĕр;

38. Мана ĕненекенĕн ăшĕнчен, Çырура каланă пек, чĕрĕлĕх шывĕ юхса тухĕ" *(Исаий 12:3; Иоиль 3:18)*.

39. Çакна Вăл, Хăйне ĕненекенсем илес Святой Сывлăш çинчен каланă, ун чухне вĕсем çинче Святой Сывлăш пулман-ха, мĕншĕн тесен Иисус ун чух мухтава тухман.

Халăх хушшинче Иисус çинчен тавлашни

40. Çак сăмахсене илтсен, халăх хушшинче нумайăшĕ каланă: "Ку чăнах та пророк", — тенĕ.

41. Теприсем каланă: "Ку Христос", — тенĕ. Тата хăшпĕрисем каланă: "Христос Галилейăран килет-и вара?

42. Çырура каламан-и, Христос Давид ăрăвĕнчен, Вифлеемре Давид çуралнă çĕртен килĕ тесе?" — тенĕ.

43. Çапла халăх хушшинче Ун пирки тавлашу тухнă.

44. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем Ăна тытасшăн пулнă; çапах никам та Ун çине алă хуман.

45. Вара пуп-пуçлăхĕсемпе фарисейсем патне тарçисем таврăнсан, лешсем тарçисене каланă: "Эсир мĕншĕн Ăна тытса килмерĕр?" — тенĕ.

46. Тарçисем каланă: "Çав Çын калаçнă пек, çын нихăçан та калаçман", — тенĕ.

47. Фарисейсем вĕсене каланă; "Эсир те улталантăр-и?" — тенĕ.

48. Пуçлăхсемпе фарисейсенчен кам та пулин Ăна ĕненнĕ-ши?

49. Çапах та çак халăх закона пĕртте пĕлмест, вăл ылханлă.

50. Вĕсенчен пĕри, Иисус патне çĕрле пынă Ни-

кодим вĕсене каланă:

51. "Пирĕн закон, çын мĕн тунине малтан хăйĕнчен ыйтса пĕлмесĕр, ăна айăплать-и?" — тенĕ.

52. Çавна хирĕç вĕсем ăна каланă: "Эсĕ те Галилейăран мар-и? Пăхса тух, вара Галилейăран пророк килмелле маррине курăн", — тенĕ.

53. Унтан пурте килĕсене саланнă.

8 - мĕш ГЛАВА

Çылăхлă хĕрарăма çăлни

1. **ИИСУС** Елеон тăвĕ çине кайнă.

2. Ирхине каллех чиркĕве пынă, вара пĕтĕм халăх Ун патне пуçтарăннă; Вăл ларнă та вĕсене вĕрентме пуçланă.

3. Çавăнта Ун патне кĕнекеçĕсемпе фарисейсем, аскăн ĕç тунă çĕрте тытнă арăма илсе пынă та, ăна варрине тăратнă.

4. Вĕсем Иисуса каланă: "Вĕрентекен! Çак арăма аскăн ĕç тунă çĕрте тытнă;

5. Законра Моисей пире ун пеккисене чулпа персе вĕлерме хушнă: Эсĕ мĕн калăн?" — тенĕ.

6. Çакна вĕсем Ăна сăнаса, Ăна айăплама мĕнле те пулин сăлтав тупасшăн каланă. Иисус вĕсем çине пăхмасăр, хытă пĕшкĕнсе пӳрнипе çĕр çине çырнă.

7. Лешсем Унран чарăнмасăр ыйтма пуçласан, Вăл пуçне çĕклесе вĕсене каланă: "Сирĕн хушшăрта кам çылăхсăр, çавă малтан ăна чулпа петĕр", — тенĕ.

8. Вара каллех пĕшкĕнсе çĕр çине çырма пуçланă.

9. Çавна илтсен, лешсем намăсланса çитсе аслинчен пуçласа кĕçĕннине çитиччен, пĕрин хыççăн тепри тухса кайма пуçланă; вара Иисуспа варрин-

че тăракан арăм анчах юлнă.

10. Иисус пуçне çĕклесе пăхнă та, арăмран пуçне никама та курмасăр, ăна каланă: "Арăм! сана айăплакансем ăçта? Никам та сана айăплаймарĕ-и?" — тенĕ.

11. Лешĕ каланă: "Вĕрентекен! Никам та айăплаймарĕ", — тенĕ. Иисус ăна каланă:" Эпĕ те сана айапламас тăп; каях, малашне çылăха ан кĕр", — тенĕ.

Иисус — тĕнче Çутти

12. Иисус татах халăха каланă: "Эпĕ тĕнче çутти; Ман хыçран пыракан тĕттĕмре çӳремĕ, унăн чĕрĕлĕх çутти пулĕ", — тенĕ.

13. Çавăн чух фарисейсем Ăна каланă: "Эсĕ, Хăвăн çинчен Ху каласа кăтартатăн, Эсĕ калани чăн мар", — тенĕ.

14. Иисус вĕсене хирĕç каланă: "Эпĕ, Хам çинчен Хам каласа кăтартатăп пулсан та, Эпĕ калани чăн, мĕншĕн тесен Эпĕ, Хам ăçтан килнине тата ăçта каяссине пĕлетĕп; эсир Эпĕ ăçтан килнине, ăçта каяссине пĕлместĕр;

15. Эсир ӳт майлă айăплатăр, Эпĕ никама та айăпламастăп;

16. Айăпласан та Эпĕ айăплани чăн, мĕншĕн тесен Эпĕ пĕччен мар, Мана Яракан Атте Манпа пĕрле;

17. Сирĕн законăрта, икĕ çын каласа кăтартни чăн тесе çырнă *(Второзак. 19:15)*;

18. Эпĕ Хам çинчен Хам каласа пĕлтеретĕп, Ман çинчен тата Мана Яракан Атте те каласа пĕлтерет", — тенĕ.

19. Вара Ăна каланă: "Санăн Аçу ăçта?", — тенĕ. "Иисус каланă: "Эсир Мана та, Манăн Аттене те пĕлместĕр; Мана пĕлнĕ пулсан, эсир Манăн Аттене те пĕлнĕ пулăттăрччĕ", — тенĕ.

20. Ҫак сӑмахсене Иисус чиркӳре, укҫа арчи патӗнче вӗрентнӗ чух каланӑ; анчах Ӑна никам та тытман, мӗншӗн тесен Унӑн вӑхӑчӗ ҫитмен-ха,

21. Иисус татах вӗсене каланӑ: ”Эпӗ каятӑп, вара Мана шырама пуҫлатӑр, эсир хӑвӑр ҫылӑхӑрпах вилетӗр; Эпӗ ӑҫта каятӑп, эсир унта пыма пултараймастӑр”, — тенӗ.

22. Ҫавӑнта Иудейсем каланӑ: ”Вӑл, Хайне Хӑй вӗлересшӗн мар-ши? Эпӗ каякан ҫӗре эсир пыраймастӑр тет”, — тенӗ.

23. Вӑл вӗсене каланӑ: ”Эсир ҫӗртен, Эпӗ ҫӳлтен; эсир ку тӗнчерен, Эпӗ ку тӗнчерен мар;

24. Ҫавӑнпа Эпӗ сире, хӑвӑр ҫылӑхӑрпах вилетӗр тесе каларӑм; Мана ӗненмесен, эсир хӑвӑр ҫылӑхӑрпах вилетӗр”, — тенӗ.

25. Вӗсем Ӑна каланӑ; ”Кам Эсӗ?” — тенӗ. Иисус вӗсене каланӑ: ”Хӑвӑра каланӑ пек, Эпӗ пуҫламӑшӗ;

26. Манӑн сирӗн ҫинчен нумай калаҫмалла, нумай суд тумалла; Мана Яраканни чӑн, Унран мӗн илтнине Эпӗ тӗнчене каласа кӑтартатӑп”, — тенӗ.

27. Вӑл Хӑйӗн Ашшӗ ҫинчен каланине вӗсем ӑнланайман.

28. Унтан Иисус вӗсене каланӑ: ”Этем Ывӑлне эсир хӗрес ҫине ҫӗклесен, ун чухне ку Эпӗ иккенне тата Эпӗ Хам тӗллӗн нимӗн те туманнине, Атте Мана вӗрентнӗ пек каланине пӗлӗр;

29. Мана Яракан Манпа пӗрле; Атте Мана пӗччен хӑвармарӗ, мӗншӗн тесен Эпӗ кирек хӑҫан та Ӑна кирлӗ пек тӑватӑп”, — тенӗ.

30. Вӑл ҫак сӑмахсене каланӑ чухне, нумайӑшӗ Ӑна ӗненнӗ.

Чуралăх е ирĕклĕх

31. Иисус çавăн чух Хăйне ĕненнĕ Иудейсене каланă: "Эсир Ман сăмаха тытса тăрсан, чăнах Манăн вĕренекенсем пулăр,

32. Вара чăнлăха пĕлĕр, чăнлăх сире ирĕке кăларĕ", — тенĕ.

33. Вĕсем Ăна хирĕç каланă: "Эпир Авраам йăхĕ, эпир нихăçан та, никамăн чури те пулман; мĕнле тата Эсĕ пире ирĕке тухăр тесе калатăн?" — тенĕ.

34. Иисус вĕсене каланă: "Чăн-чăнах калатăп сире, çылăха кĕрекен кирек кам та çылăх чури;

35. Чура хуçи килĕнче ĕмĕрех пурăнаймасть, ывăлĕ ĕмĕрех пурăнать;

36. Çапла ĕнтĕ, Ывăлĕ сире ирĕке кăларсан, эсир чăнах ирĕкре пулăр;

37. Эсир Авраам йăхĕ иккенне Эпĕ пĕлетĕп; çапах та эсир Мана вĕлересшĕн шыратăр, мĕншĕн тесен Ман сăмах сирĕн ăшăрта вырнаçаймасть.

38. Эпĕ Хамăн Атте патĕнче мĕн курнă, çавна калатăп; эсир хăвăр аçăртан мĕн курнине тăватăр", — тенĕ.

39. Вĕсем хирĕç каланă: "Пирĕн атте Авраам", — тенĕ. Иисус вĕсене каланă: "Эсир Авраам ачисем пулнă пулсан, Авраам тунă ĕçсене тунă пулăттăр;

40. Эсир Мана халь, Турăран илтнĕ чăнлăха хăвăра каласа паракан Çынна, вĕлересшĕн шыратăр: Авраам ун пек ĕç туман;

41. Эсир хăвăр аçăрăн ĕçĕсене тăватăр", — тенĕ. Çавна хирĕç Ăна каланă: "Эпир аскăн ĕç тунинчен çуралман, пирĕн пĕр Атте Турă пур", — тенĕ.

42. Иисус вĕсене каланă: "Сирĕн Аçăр Турă пулнă пулсан, эсир Мана юратнă пулăттăр, мĕншĕн тесен Эпĕ Турă патĕнчен тухса килнĕ; Эпĕ Хам

тĕллĕн килмен, Вăл Мана янă.

43. Мĕншĕн эсир Эпĕ каланине ăнланаймастăр? Мĕншĕн тесен эсир Манăн сăмахсене итлеме пултараймастăр.

44. Сирĕн аçăр шуйттан, эсир хăвăр аçăрăн усал шухăшне тăвасшăн; вăл тĕнче пуçламăшĕнченех çын вĕлерекен пулнă, ун ăшĕнче чăнлăх çук; вăл чăнлăхра тăрайман, суйса каланă чух вăл хăйĕнчен калать, мĕншĕн тесен вăлултавçă, ултав ашшĕ.

45. Эпĕ чăннине калатăп, эсир Мана çавăнпа ĕненместĕр.

46. Сирĕнтен кам Мана çылăхлă тесе айăплĕ? Эпĕ чăннине калатăп пулсан, эсир Мана мĕншĕн ĕненместĕр?

47. Кам Турăран, вăл Турă сăмахне итлет; эсир Турăран мар, çавăнпа итлеместĕр", — тенĕ.

48. Çакна хирĕç Иудейсем Ăна каланă: "Эсĕ Самария çынни, Санăн ăшăнта шуйттан тесе эпир Сана тĕрĕс каламастпăр-и?" — тенĕ.

49. Иисус каланă: "Ман ăшра шуйттан çук, Эпĕ Хамăн Аттене хисеплетĕп, эсир Мана хисепрен кăларатăр;

50. Эпĕ Хамăн мухтава шырамастăп: шыраса Илекенни те, Айăплаканни те Хăй пур;

51. Чăн-чăнах калатăп сире; Ман сăмаха тытса тăракан ĕмĕр вилĕм курмĕ", — тенĕ.

52. Иудейсем Ăна каланă: "Сан ăшăнта шуйттан пуррине халь ĕнтĕ пĕлтĕмĕр эпир; Авраам та, пророксем те вилнĕ. Эсĕ калатăн: "Ман сăмаха тытса тăракан ĕмĕр вилĕм курмĕ", — тетĕн.

Христос "Авраамран та аслă"

53. Эсĕ пирĕн Авраам аттерен те аслăрах-и-мĕн? Вăл та, пророксем те вилнĕ: Эсĕ вара Хăвна

кам вырăнне хуратăн?" — тенĕ.

54. Иисус каланă: "Эпĕ Хама Хам мухтатăп пулсан, Манăн мухтавăм нимĕн те мар: Мана, Манăн Атте мухтава кăларать, эсир Ун çинчен пирĕн Турă тесе калатăр;

55. Эсир Ăна пĕлмерĕр, Эпĕ Ăна пĕлетĕп; Ăна пĕлместĕп тесе каласан, Эпĕ сирĕн пекех ултавçă пулатăп; анчах та Эпĕ Ăна пĕлетĕп тата Унăн сăмахне тытса тăратăп;

56. Сирĕн аçăр, Авраам Ман вăхăта питĕ курасшăнччĕ; курчĕ те савăнчĕ", — тенĕ.

57. Çавна хирĕç Иудейсем Ăна каланă: "Эсĕ аллă çула та çитмен, — мĕнле тата Авраама куртăн?" — тенĕ.

58. Иисус вĕсене каланă: "Чăн-чăнах калатăп сире, Эпĕ Авраам пуличченех пур", — тенĕ.

59. Вара Ун çине пеме вĕсем чулсем илнĕ; анчах Иисус курăнми пулнă та, вĕсен хушшипе чиркӳрен тухса аяккалла кайнă.

9 - мĕш ГЛАВА

Суккăр çуралнă çынна сыватса çăлăнăç пани

1. **ИИСУС** иртсе пынă чух суккăр çуралнă çынна курнă.

2. Вĕренекенĕсем Унран ыйтнă: "Равви! Вăл кам çылăха кĕнĕшĕн суккăр çуралнă, хăй çылăхлăран е ашшĕ-амăшĕ çылăха кĕнĕрен-и?" — тенĕ.

3. Иисус каланă: "Вăл хăй те, унăн ашшĕ-амăшĕ те çылăха кĕмен, ун çинче Туррăн ĕçĕ курăнтăр тесе çапла пулнă:

4. Кун пур чухне, Ман Хама Яраканăн ĕçне тумалла; çĕрле пулсан никам та ĕç тăваймасть;

5. Эпӗ тӗнчере чух, Эпӗ тӗнче ҫутти", — тенӗ.

6. Ҫакна каласан Вӑл, ҫӗре сурнӑ та, сурчӑкӗпе пылчӑк туса, суккӑр ҫыннӑн куҫне пылчӑкпа сӗрнӗ,

7. Унтан ӑна каланӑ: "Кай та, Силоам шывӗнче ҫӑвӑн", — тенӗ. Ҫакӑ: "янӑ" тени пулать. Вӑл кайса ҫӑвӑннӑ та, куракан пулса таврӑннӑ.

8. Кӳршисем тата вӑл малтан суккӑр пулнине куракансем ҫавӑнта каланӑ: "Ку хайхи ыйткаласа ларакан ҫын мар-и вара?" — тенӗ.

9. Теприсем каланӑ: "Ку ҫавӑ", — тенӗ. Тата хӑшпӗрисем: "Вӑл ҫавӑн евӗрлӗ", — тенӗ. Хӑй вӑл каланӑ: "Эпӗ ҫавӑ", — тенӗ.

10. Вара унран ыйтма пуҫланӑ: "Санӑн куҫу мӗнле уҫӑлчӗ?" — тенӗ.

11. Вӑл каланӑ: "Иисус текен Ҫын пылчӑк туса ман куҫа сӗрчӗ те, мана каларӗ: "Кайса Силоам шывӗнче ҫӑвӑн", — терӗ. Эпӗ кайса ҫӑвӑнтӑм та, куракан пултӑм", — тенӗ.

12. Вӗсем ӑна каланӑ: "Ӑҫта Вӑл", — тенӗ. Ку каланӑ: "Пӗлместӗп", — тенӗ.

13. Вара малтан суккӑр пулнӑ ҫынна фарисейсем патне илсе кайнӑ.

14. Иисус пылчӑк туса унӑн куҫне уҫни шӑматкун пулнӑ.

15. Фарисейсем те унран, вӑл мӗнле куракан пулни ҫинчен ыйтнӑ. Вӑл вӗсене каланӑ: "Иисус ман куҫ ҫине пылчӑк хучӗ, эпӗ ҫӑвӑнтӑм та куракан пултӑм", — тенӗ.

16. Унтан фарисейсенчен хӑшпӗрисем каланӑ: "Ҫав Ҫын Турӑран мар, мӗншӗн тесен Вӑл шӑматкуна хисеплемест", — тенӗ. Теприсем каланӑ: "Ҫакӑн пек тӗлӗнмелле ӗҫе ҫылӑхлӑ ҫын мӗнле тутӑр?" — тенӗ. Вара вӗсен хушшинче тавлашу тухнӑ.

17. Суккăр пулнă çынна татах каланă: "Эсĕ Ун çинчен мĕн калăн, мĕншĕн тесен Вăл санăн куçна уçнă?" — тенĕ. Ку каланă: "Вăл пророк", — тенĕ.

18. Çавăн чух Иудейсем, çак куракан пулнă çыннăн ашшĕпе амăшне чĕнтерсе пымасăр та, суккăр çын куракан пулнине ĕненмен.

19. Вара вĕсенчен ыйтнă: "Сирĕн суккăр çуралнă ывăлăр çакă-и? Вăл халь мĕнле куракан пулчĕ?" — тенĕ.

20. Унăн ашшĕпе амăшĕ вĕсене хирĕç каланă: "Ку пирĕн ывăл, вăл суккăр çуралнине эпир пĕлетпĕр;

21. Анчах халь мĕнле куракан пулнине пĕлместпĕр, унăн куçне Кам уçнине те пĕлместпĕр. Вăл хăй те çитĕннĕ çын, хăйĕнчен ыйтăр, хăй çинчен хăех каласа патăр", — тенĕ.

22. Унăн ашшĕпе амăшĕ Иудейсенчен хăранă пирки çапла каланă; мĕншĕн тесен Иисуса Христос тесе ĕненекен çынна, Иудейсем синагогаран уйăрса яма калаçса татăлнă;

23. Çавăнпа унăн ашшĕпе амăшĕ: "Вăл хăй те çитĕннĕ çын, хăйĕнчен ыйтăр", — тесе каланă.

24. Унтан суккăр пулнă çынна иккĕмĕш хут чĕнсе илсе каланă: "Эсĕ Турра мухта; Лешĕ çылăхлă Çын, эпир Ăна пĕлетпĕр", — тенĕ.

25. Ку вĕсене хирĕç каланă: "Çылăхлă çын-и Вăл, эпĕ пĕлместĕп; çакна анчах пĕлетĕп, эпĕ суккăрччĕ, халь акă куратăп", — тенĕ.

26. Унран татах ыйтнă: "Вăл сана мĕн турĕ, сан куçна мĕнле уçрĕ?" — тенĕ.

27. Ку вĕсене каланă: "Эпĕ сире каларăм ĕнтĕ, анчах эсир итлемерĕр; тата мĕн илтес тетĕр, е эсир те Унăн вĕренекенĕсем пуласшăн-и?" — тенĕ.

28. Вěсем ăна ӳпкелесе каланă: ”Эсě Унăн вěренекенě, эпир Моисейěн вěренекенěсем:

29. Моисейпе Турă калаçнине эпир пěлетпěр, Ку Çын ăçтан иккенне пěлместпěр”, — тенě.

30. Куракан пулнă çын вěсене хирěç каланă:” ”Çавăнтан тěлěнмелле те ěнтě, Вăл ман куçа уçрě, эсир Вăл ăçтан иккенне пěлместěр.

31. Эпир пěлетпěр, çылăхлă çынсене Турă итлеместь, кам Турра хисеплесе Унăн ирěкне тăвать, çавна итлет;

32. Суккăр çуралнă çыннăн куçне кам та пулин уçнă тени, ěмěрте те илтěнмен;

33. Вăл Турăран пулман пулсан, нимěн те тума пултараймěччě”, —тенě.

34. Ăна хирěç каланă: ”Эсě пěтěмпех çылăхлă çуралнă тата пире вěрентетěн-и?” — тенě. Вара ăна хăваласа кăларса янă.

35. Ăна хăваласа кăларнине илтсен, Иисус ăна тěл пулса каланă: ”Эсě Туррăн Ывăлне ěненетěн-и?” — тенě.

36. Вăл каланă: ”Эй! Вěрентекен, кам Вăл? Ăна манăн ěненесчě”, — тенě.

37. Иисус ăна каланă: ”Эсě куртăн ěнтě Ăна, Вăл санпа калаçса тăрать”, — тенě.

38. Сывалнă çын каланă: ”Вěрентекен, ěненетěп!” — тенě. Вара ӳксе Ăна пуççапнă.

39. Унтан Иисус каланă: ”Суккăррисем куракан пулччăр, кураканнисем суккăр пулччăр тесе, çак тěнчене Эпě суд тума килтěм”, — тенě.

40. Çакна илтсен, Унпа пěрле тăракан фарисейсенчен хăшпěрисем Ăна каланă: ”Эпир те суккăр-и вара?” — тенě.

41. Иисус вĕсене каланă: ”Эсир суккăр пулнă пулсан, сирĕн çинче çылăх пулмĕччĕ; анчах та эсир, эпир куратпăр тесе калатăр, çавăнпа сирĕн çылăхăр хăвăр çинчех юлать”.

10 - мĕш ГЛАВА

Сурăхсем çинчен юптаруллă калани: Христос-Ырă Кĕтӳç

1. **ЧĂН—ЧĂНАХ** калатăп сире: кам сурăх картине алăкран кĕмест, урăх çĕртен каçса кĕрет, вăл вăрă, вăрă-хурах;

2. Алăкран кĕрекенни вăл сурăхсен кĕтӳçĕ:

3. Ăна алăк хуралçи алăкне уçать, сурăхĕсем те унăн сассине итлеççĕ, вăл хăйĕн сурăхĕсене ятран чĕнсе кăларать;

4. Сурăхĕсене кăларсан, вăл вĕсен умĕнчен пырать; сурăхсем унăн сассине пĕлсе, ун хыçĕнчен пыраççĕ;

5. Ют çын хыçĕнчен каймаççĕ, ют сасса пĕлменрен вĕсем унран тараççĕ”, — тенĕ.

6. Çакна Иисус вĕсене юптаруллă каланă. Анчах вĕсем Вăл мĕн каланине ăнланман.

7. Унтан Иисус вĕсене татах каланă: ”Чăн-чăнах калатăп сире, Эпĕ сурăхсен алăкĕ.

8. Манран малтан килнисем пурте вăрăсем, вăрă-хурахсем; анчах сурăхсем вĕсене итлемерĕç.

9. Эпĕ алăк: Ман витĕр кĕрекен çăлăнĕ, вăл кĕрĕ те, тухĕ те, çимелли те тупĕ,

10. Вăрă вăрлама, вĕлерме, пĕтерме анчах килет; Эпĕ, вĕсем ĕмĕрлĕх пурнăç тупчăр тата вĕсен пурнăçĕ тулăхлă пултăр тесе килтĕм.

Кĕтӳç çинчен юптаруллă калани: Христос-Ырă Кĕтӳç

11. Эпĕ ырă Кĕтӳç: ырă Кĕтӳç сурăхĕсемшĕн Хăйĕн чунне парать.

12. Тара тытнă çын кĕтӳçĕ мар, сурăхĕсем те ун хăйĕн мар, вăл кашкăр пынине курать те сурăхĕсене пăрахса тарать, кашкăр вара сурăхсене тытать, салатса та пĕтерет;

13. Тара тытнă çын тарать, мĕншĕн тесен вăл тара тытнă çын, вăл сурăхсемшĕн тăрăшмасть.

14. Эпĕ ырă Кĕтӳç, Эпĕ Хамăн сурăхсене пĕлетĕп, Ман сурăхсем те Мана пĕлеççĕ:

15. Атте Мана пĕлнĕ пек, Эпĕ те Аттене пĕлетĕп, сурăхсемшĕн Эпĕ Хамăн чунăма паратăп.

16. Манăн урăх сурăхсем те пур, вĕсем ку картара мар, Манăн вĕсене те илсе килмелле; вĕсем те Ман сасса илтĕç, вара пĕр кĕтӳ, пĕр Кĕтӳçĕ пулĕ.

17. Эпĕ Хамăн чуна парса, ăна каяллах илес тесе паратăп, çавăнпа Атте Мана юратать;

18. Ман чуна, Манран никам та туртса илмест, Эпĕ ăна Хам паратăп; Манăн ăна пама ирĕк пур, ăна каялла илме те ирĕк пур; çак заповеде Эпĕ Хамăн Аттерен илтĕм.

Халăх хушшинче татах Христос пирки тавлашни

19. Çак сăмахсем пирки Иудейсен хушшинче каллех тавлашу тухнă.

20. Вĕсенчен нумайăшĕ каланă: "Ăна усал ернĕ, Вăл ухмахланать, Ăна мĕн итлетĕр", — тенĕ.

21. Теприсем каланă: "Ку сăмахсем усал ернĕ
çын сăмахĕсем мар; суккăр çын куçне уçма усал пул-
тарать-и?" — тенĕ.
22. Çавăн чух, Иерусалимре чиркĕве çĕнетнине
асăнса тăвакан праçник çитнĕ, вăл хĕлле пулнă.
23. Иисус чиркÿре, Соломон пÿлĕмĕнче çÿренĕ.
24. Çавăнта Иудейсем Ăна сырса илсе каланă:
"Эсĕ хăçанччен пире иккĕлентерсе тăратăн? Эсĕ
Христос пулсан, пире тÿрех кала", — тенĕ.
25. Иисус вĕсене хирĕç каланă: "Эпĕ сире кала-
рăм, эсир ĕненместĕр; Эпĕ Атте ячĕпе тăвакан ĕçсем
Ман çинчен пĕлтерсе тăраççĕ;
26. Çапах эсир ĕненместĕр, Эпĕ сире каланă пек,
эсир Ман сурăхсем мар;
27. Ман сурăхсем, Манăн сасса итлеççĕ; Эпĕ
те вĕсене пĕлетĕп, вĕсем Ман хыçран пыраççĕ,
28. Эпĕ вĕсене ĕмĕрлĕх пурнăç паратăп, вĕсем
ĕмĕрех вилмĕç, Ман аллăран вĕсене никам та туртса
илеймест;
29. Атте вĕсене Мана панă, Вăл пуринчен те аслă,
Ман Атте аллинчен вĕсене никам та туртса илме
пултараймасть:
30. Эпĕ те, Атте те — пĕр", — тенĕ.
31. Çавăнта Иудейсем, Ăна персе вĕлерес тесе
татах чулсем илнĕ.
32. Иисус вĕсене каланă: "Эпĕ сире Хамăн Атте
хăвачĕпе ырă ĕçсем нумай туса кăтартрăм; вĕсенчен
хăшĕншĕн эсир Мана чулпа персе вĕлересшĕн?" —
тенĕ.
33. Иудейсем Ăна хирĕç каланă: "Эпир Сана
ырă ĕçшĕн чулпа персе вĕлересшĕн мар, Турра хур-
ланăшăн тата Ху çын пулсан та, Хăвна Турă вырăн-
не хунăшăн персе вĕлересшĕн", — тенĕ.

34. Иисус вĕсене каланă: "Сирĕн законăррта: Эпĕ каларăм: "Эсир турăсем, терĕм", — тесе çырман-и? *(Псал. 81:6)*

35. Туррăн сăмахне тытса тăракансене, эсир турăсем тесе каласан та Çыру пăсăлмасть пулсан, —

36. Мĕнле тата эсир Мана, Атте Хăй тасатса тĕнчене Янăскерне: "Эпĕ Турă Ывăлĕ "тенĕшĕн, эсĕ "Турра хурлатăн" — тетĕр?

37. Эпĕ Аттен ĕçĕсене тумастăп пулсан, ан ĕненĕр Мана;

38. Тăватăп пулсан, Мана ĕненмесен те Атте Ман ăшрине, Эпĕ те Унăн ăшĕнчине пĕлсе ĕненмешкĕн, Эпĕ тунă ĕçсене ĕненĕр", — тенĕ.

39. Çавăн чухне татах Ăна тытма май шыранă; анчах Вăл, вĕсем тытасран пăрăннă.

40. Вара Иисус каллех, Иордан леш енне, Иоанн малтан шыва кĕртнĕ вырăна кайса унта юлнă.

41. Нумайăшĕ Ун патне пырса каланă: "Иоанн пĕр хăват та тумарĕ; çапах та Иоанн Сан çинчен калани пурте чăн пулчĕ", — тенĕ.

42. Унта вара Иисуса нумайăшĕ ĕненнĕ.

11 - мĕш ГЛАВА

Лазарь вилĕмĕ тата ăна чĕртсе тăратни Христос-ĕмĕрлĕх пурнăç паракан

1. **МАРИЙĂПА** унăн аппăшĕ Марфа пурăнакан Вифани ялĕнче, Лазарь ятлă çын чирлĕ выртнă.

2. Çав Мария, Иисуса мирă сĕрсе, Унăн урине хăйĕн çӳçĕпе шăлакан Мария пулнă, чирлĕ Лазарь унăн пиччĕшĕ пулнă.

3. Лазарь йăмăкĕсем Иисус патне: "Эй, Вĕрентекен! Акă, Санăн юратнă çынну чирлĕ выртать", — тесе калама янă.

4. Çакна илтсен Иисус каланă: "Ку чир вилĕм чирĕ мар, Турă мухтавне кăтартас чир, ун урлă Туррăн Ывăлĕ мухтава тухмалла", — тенĕ.

5. Иисус Марфăна та, унăн йăмăкне те, Лазаре те юратнă.

6. Лазарь чирлĕ тенине илтсен, Иисус çав вырăнта тата икĕ кун пурăннă.

7. Çавăн хыççăн Вăл вĕренекенĕсене каланă: "Атьăр, каллех Иудейăна каяр", — тенĕ.

8. Вĕренекенĕсем Ăна каланă: "Равви! *(вĕрентекен)* Иудейсем Сана чулпа персе вĕлерме шырани нумай пулать-и? Эсĕ татах унта каятăн", — тенĕ.

9. Иисус каланă: "Пĕр кунра вуникĕ сехет мар-и? Кăнтăрла çӳрекен такăнмасть, мĕншĕн тесен вăл çак тĕнче çуттине курать;

10. Çĕрле çӳрекен такăнать, мĕншĕн тесен унпа пĕрле çутă çук", — тенĕ.

11. Çакна каласан, кайран вĕсене каланă: "Пирĕн Лазарь тус çывăрса кайнă, Эпĕ ăна вăратма каятăп", — тенĕ.

12. Унăн вĕренекенĕсем каланă: "Вĕрентекен! Вăл çывăрса кайнă пулсан сывалĕ", — тенĕ.

13. Иисус Лазарь вилни çинчен каланă; анчах вĕсем, Вăл ахаль çывăрни çинчен калать пулĕ тесе шухăшланă.

14. Вара Иисус вĕсене тӳрех каланă:"Лазарь вилнĕ;

15. Ĕнтĕ сирĕншĕн савăнатăп, Эпĕ унта сире ĕнентересшĕн каймарăм; атьăр, каяр ун патне", — тенĕ.

16. Йĕкĕреш текен Фома вĕренекенсене çавăн чух каланă: "Атьăр, унпа пĕрле эпир те кайса вилер", — тенĕ.

17. Иисус пыриччен, Лазарь тăватă кун тупăкра выртнă.

18. Вифани ялӗ, Иерусалим ҫывӑхӗнче пӗр вун-
пилӗк стадийӑра пулнӑ.
19. Пиччӗшӗшӗн хуйхӑракан Марфӑпа Марийӑ-
на лӑплантарма — Иудейсенчен нумайӑшӗ пынӑ.
20. Иисус килет тенине илтсен, Марфа Ӑна хи-
рӗҫ кайнӑ; Мария килне ларса юлнӑ.
21. Ҫавӑн чух Марфа Иисуса каланӑ: "Эй, Ӗрен-
текен! Эсӗ кунта пулнӑ пулсан, пиччем вилмен
пулӗччӗ;
22. Ҫапах та эпӗ пӗлетӗп, Эсӗ Турӑран кирек мӗн
ыйтсан та, Турӑ Сана парать", — тенӗ.
23. Иисус ӑна каланӑ: "Санӑн пиччӳ чӗрӗлсе тӑ-
рӗ", — тенӗ.
24. Марфа Ӑна каланӑ: "Пӗлетӗп, юлашки кун
вилнӗ ҫынсем чӗрӗлсе тӑнӑ чух, чӗрӗлсе тӑрӗ вӑл".
— тенӗ.
25. Иисус ӑна каланӑ: "Чӗртсе тӑратакан та, чӗ-
рӗлӗх пурнӑҫ паракан та Эпӗ; Мана ӗненекен вилсен
те чӗрӗлӗ;
26. Мана ӗненсе пурӑнакан кирек кам та ӗмӗр
вилмӗ. Ҫавна ӗненетӗн-и?" — тенӗ.
27. Марфа Ӑна каланӑ: "Ҫапла, Ӗрентекен! Эпӗ
пӗлетӗп, Эсӗ тӗнчене килнӗ Туррӑн Ывӑлӗ Христос",
— тенӗ.
28. Ҫакна каласан, Марфа кайнӑ та хӑйӗн йӑмӑк-
не Марийӑна вӑрттӑн чӗнсе каланӑ: "Ӗрентекен
кунта сана чӗнет", — тенӗ.
29. Мария, ҫавна илтсенех васкаса тӑнӑ та, Ун пат-
не кайнӑ.
30. Иисус ун чух яла кӗмен пулнӑ, Хӑйне Марфа
хирӗҫ тухнӑ вырӑнта Вӑл тӑнӑ.
31. Пӳртре Марийӑна лӑплантарса ларакан Иудей-
сем, вӑл васкаса тӑрса тухса кайнине курсан, пиччӗ-
шне пытарнӑ тупӑк патне йӗме каять пулӗ тесе, ун

хыççăн кайнă.

32. Мария, Иисус тăракан вырăна пырсан Ăна курнă та, Ун ури умне ӳксе, Ăна каланă: ”Эй, Вĕрентекен! Эсĕ кунта пулнă пулсан, пиччем вилмен пулĕччĕ”, — тенĕ.

33. Вăл йĕнине тата унпа пĕрле пынă Иудейсем те йĕнине курсан, Иисус Хăй те чĕререн хурланса пăлханнă.

34. Вара каланă: ”Эсир ăна ăçта пытарнă?” — тенĕ. Лешсем каланă: ”Эй, Вăрентекен! Пырса пăхсам”, — тенĕ.

35. Иисусăн куççулĕ тухнă.

36. Çавăн чух Иудейсем каланă: ”Пăхăр-ха, Вăл ăна мĕнле юратнă!” — тенĕ.

37. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем каланă: ”Суккăр çыннăн куçне уçнăскер, Ку çакна та вилмелле мар тума пултарайман пулĕччĕ-ши?” — тенĕ.

38. Иисус вара хăйĕн ăшĕнче хуйхăрса шăтăк патне пынă; çав шăтăк ту айккинче пулнă, ăна чулпа хупласа хунă.

39. Иисус каланă: ”Чулне илĕр”, — тенĕ. Вилнĕ Лазарĕн йăмăкĕ Марфа Ăна каланă: ”Эй, Вĕрентекен! Ăна тупăка хуни тăватă кун; ĕнтĕ виле шăрши те кĕрет”, — тенĕ.

40. Иисус ăна каланă: ”Ĕненетĕн пулсан, Туррăн мухтавне курăн тесе, Эпĕ сана каламарăм-и?” — тенĕ.

41. Унтан вилнĕ çын выртакан шăтăк умĕнчи чула илнĕ. Иисус вара пĕлĕт çинелле пăхса каланă: ”Эй, Аттем! Эсĕ Мана илтнĕшĕн Сана тав тăватăп;

42. Эсĕ Мана яланах илтессине Эпĕ пĕлетĕп; çакна Эпĕ, кунта тăракан халăхшăн, Мана Эсĕ янине вĕсем ĕненччĕр, тесе каларăм”.

43. Çакна каласан, Вăл хытă сасăпа чĕнсе каланă: ”Лазарь! Тух”, — тенĕ.

44. Вара вилнĕ çын аллисене те, урисене те пирпе чĕркенипех тата питне тутăрпа çыхнипех тухнă. Иисус вĕсене каланă: "Салтса ярăр ăна, утса пытăр", — тенĕ.

45. Çавăн чухне Иисус хăват тунине курсан, Мария патне пынă Иудейсем нумайăшĕ Ăна ĕненнĕ;

46. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем фарисейсем патне кайса, Иисус мĕн тунине вĕсене каласа панă.

47. Вара пуп-пуçлăхĕсемпе фарисейсем пуху пуçтарса каланă: "Мĕн тумалла пирĕн? Çак Çын питĕ нумай хăватсем тăвать;

48. Ăна çаплах хăварсан, пурте Ăна ĕненĕç, вара Рим çыннисем килсе пирĕн çĕре те, халăха та хăйсен аллине илĕç", — тенĕ.

49. Вĕсенчен пĕри, çав çул пуп-пуçлăхĕ пулса тăракан Каиафа вĕсене каланă: "Эсир нимĕн те пĕлместĕр;

50. Пĕтĕм халăх пĕтиччен, пуриншĕн те пĕр çын вилни пирĕншĕн аванрах пулĕ тесе те шухăшламастăр", — тенĕ.

51. Çакна вăл хăйĕнчен каламан, çав çул пуп-пуçлăхĕ пулса тăнă тăрăх, Иисус халăхшăн вилессине,

52. Халăхшăн анчах мар, Туррăн саланса кайнă ачисене те *(Еврей халăхне)* пĕр çĕре пухасшăн вилессине вăл малтанах каласа хунă.

53. Çав кунран вĕсем Иисуса вĕлерме калаçса татăлнă.

54. Çавăнпа Иисус Иудейсен хушшинче курăнса çӳремен, унтан вара пушхир çывăхĕнчи çĕршыва, Ефраим ятлă хулана кайса, Хăйĕн вĕренекенĕсемпе çавăнта юлнă.

55. Иудейсен Пасха праçникĕ çывхарса килнĕ, нумайăшĕ пĕтĕм çĕршывран Пасха праçникĕ умĕн Иерусалиме тасалма пынă.

56. Çавăн чух вĕсем Иисуса шыранă, чиркӳре тăнă чух пĕр-пĕрне каланă: "Эсир мĕнле шухăшлатăр, Вăл праçнике килмĕ-ши?" — тенĕ.

57. Пуп-пуçлăхĕсемпе фарисейсем Иисуса тытасшăн пулса, кам та пулин Вăл ăçтине пĕлсен, хăйсене пырса калама хушнă.

12 - мĕш ГЛАВА

Христос Хăйĕн вĕренекенĕсемпе Вифанире каçхи апат туни

1. **ПАСХА** праçникĕ çитиччен ултă кун малтан Иисус Хăй вилĕмрен чĕртсе тăратнă Лазарь пурăнакан Вифани ялне пынă.

2. Унта Ăна валли каçхи апат хатĕрленĕ, Марфа вĕсемшĕн ĕçлесе çӳренĕ, Лазарь Иисуспа ларакансен хушшинче пулнă.

3. Мария пĕр кĕренке хаклă йышши таса нард çăвĕ *(мира)* илнĕ те, Иисусăн урисене сĕрсе, хăйĕн çӳçĕпе Унăн урисене шăлнă; вара пĕтĕм пӳрте мира шăрши сарăлнă.

4. Çавăн чух Унăн вĕренекенĕсенчен пĕри, Иисуса тытса паракан Симон ывăлĕ Иуда Искариот каланă:

5. "Ку мирăна виççĕр динарие сутса, укçине мĕншĕн чухăнсене валеççе памалла марччĕ?" — тенĕ.

6. Вăл çавна чухăнсемшĕн тăрăшса каламан, хăй вăрă пулнă пирки каланă; ун çумĕнче укçа арчи пулнă, çав арчана янă укçасене вăл йăтса çӳренĕ.

7. Иисус каланă: "Ан тивĕр ăна, ку çăва вăл Мана пытарас кун валли усранă;

8. Чухăнсем сирĕн яланах пулĕç, Эпĕ яланах пулмăп", — тенĕ.

9. Иудейсенчен нумайăшĕ Вăл унта тенине пĕ-

лсен, Иисус патне анчах мар, Вăл вилĕмрен чĕртсе тăратнă Лазаре те курасшăн пынă.

10. Пуп-пуçлăхĕсем вара Лазаре те вĕлерме калаçса татăлнă.

11. Мĕншĕн тесен ăна пула Иудейсенчен нумайăшĕ пырса Иисуса ĕненнĕ.

Христос Иерусалиме чаплăн пырса кĕни

12 Тепĕр кунне темĕн чухлĕ халăх, Иисус Иерусалиме килет тенине илтсен,

13. Пальма турачĕсем илнĕ те, Ăна хирĕç тухса: ”Осанна! Турă ячĕпе Килекен Израиль Патши мухтавлă!” — тесе кăшкăрса пынă.

14. Иисус çамрăк ашак тупса, ун çине утланса ларнă, Çырура Ун çинчен çапла çырнă:

15. ”Эй, Сион хĕрĕ, ан хăра! Акă санăн Патшу çамрăк ашак çине ларса килет” *(Захар. 9:9)*.

16. Унăн вĕренекенĕсем çакна малтан ăнланман; Иисус çинчен малтанах çапла çырнине, çакна хăйсем Уншăн тунине, Иисус мухтава тухсан тин вĕсем астуса илнĕ.

17. Çакăн умĕн Иисуспа пĕрле çӳренĕ халăх, Вăл Лазаре тупăкран чĕнсе кăларса, ăна вилĕмрен чĕртсе тăратнине каласа кăтартнă;

18. Çав хăвата Иисус тунине илтсе, халăх Ăна хирĕç тухнă.

19. Фарисейсем хăйсен хушшинче калаçнă: ”Куратăр-и, нимĕн те тăваймастпăр? Пĕтĕм тĕнче Ун хыççăн каять”, — тенĕ.

Христос каллех Хăйĕн вилĕмĕ çинчен пĕлтерсе калани

20. Турра пуççапма праçнике пынисен хушшинче хăшĕ-пĕрисем Еллинсем пулнă;

21. Вĕсем Филипп патне пырса (вăл Галилейăри Вифсаида хулинчен пулнă) унран: "Ырă çын, пирĕн Иисуса курас килет", — тенĕ.

22. Филипп çавна Андрее кайса каланă; кайран вара Андрейпе Филипп çавăн çинчен Иисуса каланă.

23. Иисус вĕсене хирĕç каланă: "Этем Ывăлĕн мухтава тухас вăхăт çитрĕ ĕнтĕ.

24. Чăн-чăнах калатăп сире, тулă пĕрчи çĕр çине ӳксе çĕрсе шăтмасан, пĕр пĕрчĕ халлĕнех юлать; çĕрсе шăтса тухсан, нумай пĕрчĕ пултарать.

25. Хăйĕн чунне юратакан, ăна çухатĕ; ку тĕнчере хăйĕн чунне курайман çын, ăна ĕмĕрлĕх пурнăç валли усрĕ.

26. Ман ирĕке тăвакан, Ман хыçран пытăр, Эпĕ ăçта пулăп, Манăн чура та çавăнта пулĕ; Ман ирĕке тăвакана Манăн Аттем хисеплĕ.

27. Манăн чунăм тăвăрланса çитрĕ ĕнтĕ, Эпĕ мĕн калам-ши? Эй, Аттем! Çак сехетрен хăтарсам Мана! Анчах Эпĕ çак сехетшĕн килнĕ.

28. Эй, Аттем! Хăвăн ятна мухтава кăлар", — тенĕ. Çав вăхăтра пĕлĕтрен: "Кăлартăм тата кăларăп", — — тенĕ сасă илтĕннĕ.

29. Çавăнта тăракан халăх çав сасса илтсен: "Ку аслати", — тенĕ. Теприсем тата каланă: "Ăна Ангел каларĕ", — тенĕ.

30. Иисус çавна хирĕç каланă: "Ку сасă Маншăн пулмарĕ, халăхшăн пулчĕ;

31. Халĕ çак тĕнчене суд пулать, çăк тĕнче пуçлăхне халь хăваласа кăларĕç,

32. Эпĕ çĕр çинчен çĕкленсен, пурне те Хам пата пуçтарăп", — тенĕ.

33. Çакна Вăл, Хăй мĕнле вилĕмпе вилессине пĕлтерсе каланă.

Халăх хушшинче икĕ тĕрлĕ калаçни: пĕрисем ĕненнĕ, теприсем ĕненмен

34. Халăх Ăна каланă: "Христос ĕмĕрех тăмалла тенине эпир законра илтнĕ; мĕнле тата Эсĕ, Этем Ывăлĕн çӳле çĕкленмелле тетĕн? Этем Ывăлĕ кам Вăл?" — тенĕ.

35. Вара Иисус вĕсене каланă: "Сирĕнпе пĕрле çутă тата кăшт анчах тăрĕ; çутă пур чухне çӳрĕр, сире тĕттĕм хупласа ан илтĕр, тĕттĕмре çӳрекен хăй ăçта кайнине те пĕлмест;

36. Çутă хăвăрпа пĕрле чух çутта ĕненĕр, вара çутă ывăлĕсем пулăр", — тенĕ. Çакна каласан, Иисус вĕсем патĕнчен кайса курăнми пулнă.

37. Вăл вĕсен умĕнче темĕн чухлĕ хăват тунă, çапах та вĕсем Ăна ĕненмен.

38. Çапла вара Исаий пророк калани çитнĕ; вăл каланă: "Эй, Турă! Пирĕнтен илтнине кам ĕненĕ? Туррăн хăвачĕ кама уçăлĕ?" *(Ис. 53:1)*

39. Исаий пророк каланă пек, вĕсем ĕненесшĕн те пулман. вăл татах каланă:

40. "Çак халăх хăйĕн куçне суккăрлатрĕ, чĕрине хытарчĕ, куçĕпе те курмасть, чĕрипе те ăнланса илмест, хăйсене сыватма Ман еннелле те çаврăнасшăн мар" *(Ис. 9:6—10)*.

41. Исаий çак сăмахсене Туррăн мухтавне курсан, Ун çинчен пĕлтерсе каланă.

42. Çапах пуçлăхсем хушшинчен те нумайăшĕ Иисуса ĕненнĕ, анчах хăйсене фарисейсем синагогаран

уйăрса ан яччăр тесе, хăйсем ěненнине палăртман;

43. Мěншěн тесен вěсем этем мухтавне Туррăн мухтавěнчен ытла юратнă.

44. Иисус хытă сасăпа каланă: "Мана ěненекен Мана мар, Мана Яракана ěненет;

45. Мана куракан та Мана Яракана курать.

46. Эпě çутă, Мана ěненекен пěри те тěттěмре ан юлтăр тесе, Эпě тěнчене килтěм.

47. Ман сăмаха илтсен те, Мана ěненмен çынна Эпě айăпламастăп: мěншěн тесен Эпě тěнчене айăплама килмен, çăлма килнě.

48. Мана ěненмен тата Ман сăмахсене йышăнман çыншăн хăйěн айăплакан пур: юлашки кун ăна Эпě калакан сăмах айăплě;

49. Мěншěн тесен Эпě Хамран каламарăм, Мана Яракан Атте каларě, мěн каламаллине тата мěнле каламаллине Вăл Мана хушрě;

50. Эпě пěлетěп, Вăл хушса калани ěмěрлěх пурнăç парать. Çавăнпа Эпě кирек мěн каласан та, Атте хушнă пек калатăп".

ИОАНН ÇЫРНĂ ТАСА ЕВАНГЕЛИЙĔН

Иккĕмĕш пайĕ

Христос Хăйĕннисемшĕн ĕçлени

13-мĕш главаран 17-мĕш главана çитиччен

Турра ĕненекенсем, хăйсене çак тĕнче кураймасăр хăвалани çине пăхмасăр, хăйсен пурнăçĕнче юратупа килĕшӳ кӳрсе тăраççĕ.

Çак 13-мĕш главаран 17-мĕш главана çитиччен, ĕненекен çыншăн ырлăхлă тата телейлĕ пурнăç Христосран илме, çичĕ тĕрлĕ май пур:

1) Ĕненекен çыннăн "тусанлă çул" çинче утнă чух, Турăран уйрăлса çухатнă çыхăнăва çĕнĕрен çирĕплетсе пиллĕх илме, хăйĕн "урисене çутарма" яланах Христос патне пымалла (13-мĕш гл 5 ст. вулăр).

2) Ĕненекен çынсен пĕр-пĕрне юратса пурăнмалла (13:34).

3) Ĕненекен çыннăн, кашни кун Атте Турра тата Унăн Ывăлне Христоса ĕненнине çирĕплетмелле; чĕрери канăçлăх çавăнтан килет (14:1).

4) Ĕненекен çыннăн кашни кун Христос ăшĕнче пулмалла, унсăрăн ырă çимĕç паракан пурнăç пулма та пултараймасть! (15-мĕш глава). Эпир Христос хушнине туса тăни, Ун "ăшĕнче" пулнине пĕлтерет (15:10).

5) Турă, Хăйне ĕненекенсемшĕн Лăплантаракан янă: Вăл Чăнлăх, Святой Сывлăш (14:16—25; 16:1—15).

6) Ĕненекен çыннăн, яланах Христос ячĕпе Турра кĕлĕ тумалла (14:13—14; 15:17; 16:23—24).

7) Христос çĕр çинче чух мĕнле Хăйĕн вĕренекенĕсемшĕн кĕлĕ тунă, çавăн пекех халĕ те, Хăйне ĕненекенсемшĕн Атте Турă умĕнче пĕр чарăнмасăр кĕлĕ тунине пĕлме парать (17. гл вулăр).

13 - мĕш ГЛАВА

Иисус вĕренекенĕсен урисене çуни

1. **ПАСХА** праçникĕ умĕн Иисус Хăй çак тĕнчерен Ашшĕ патне куçмалли вăхăт çитнине пĕлсе, Хăйĕн тĕнчере пурăнакан вĕренекенĕсене юратса, вĕсене вĕçне çитичченех юратнине ĕçпе кăтартнă.

2. Каçхи апат тунă вăхăтра, шуйттан Симон ывăлĕ Иуда Искариот чĕрине Иисуса тытса пама шухăш кĕртсен,

3. Иисус, Ашшĕ пурне те Ун аллине панине пĕлсе тата Вăл Турă патĕнчен аннине, Турă патне каяссине пĕлсе,

4. Апат тунă çĕртен тăрса çиелти тумтирне хывнă та, алшăлли илсе пилĕкне çыхнă;

5. Унтан çăвăнмалли савăта шыв янă та, вĕренекенĕсен урисене çуса, пилĕкне çыхнă алшăллипе шăлма пуçланă.

6. Петр текен Симон патне çитсен, лешĕ Ăна каланă: "Эй, Вĕрентекен! ман урасене Санăн çумалла-и?" — тенĕ.

7. Иисус ăна хирĕç каланă: "Эпĕ мĕн тунине эсĕ халь пĕлместĕн, кайран ăнланса илĕн", — тенĕ.

8. Петр Ăна каланă: "Ман урасене Эсĕ ĕмĕрне те çăваймăн", — тенĕ. Иисус ăна хирĕç каланă:

"Сана Эпĕ çумасан, Манпа пĕрле пая кĕреймĕн", — тенĕ.

9. Петр текен Симон Ăна каланă: "Эй, Вĕрентекен! апла пулсан, урасене анчах мар алăсене те, пуçа та çу", — тенĕ.

10. Иисус ăна каланă: "Çăвăнса тасалнă, çыннăнне урисене анчах çумалла, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕмпех таса; эсир те таса, анчах пурте мар", — тенĕ.

11. Вăл Хăйне тытса паракана пĕлнĕ, çавăнпа эсир пурте таса мар тесе каланă.

12. Вĕсен урисене çуса пĕтерсен, Хăйĕн тумтирне тăхăннă та каллех çиме ларса вĕсене каланă: "Эпĕ сире мĕн тунине эсир ăнлантăр-и?

13. Эсир Мана Вĕрентекен тата Пуçлăх тетĕр, çавна тĕрĕс калатăр, Эпĕ чăнах та Çавă.

14. Эпĕ сирĕн Вĕрентекенĕр тата Пуçлăхăр пулсан та сирĕн урăрсене çурăм, апла пулсан, сирĕн те пĕр-пĕрин урисене çумалла:

15. Эпĕ сирĕншĕн тунă пек эсир те тăвăр тесе, Эпĕ сире тĕслĕх кăтартса патăм.

16. Чăн-чăнах калатăп сире: чура хăйĕн хуçинчен аслă мар, хушса янă çын та хăйне хушса яраканран аслă мар.

17. Çавна пĕлсе, туса тăрсан, эсир телейлĕ.

18. Пурин çинчен те сире каламастăп: Хам суйласа илнисене Эпĕ пĕлетĕп. Çыру çинче çырни вырăна килчĕ ĕнтĕ: "Манпа пĕрле çăкăр çиекен, Мана хирĕç урине çĕклерĕ" *(Псал. 40:10)*

19. Çав ĕç пулса çитсен, Ку чăнах та Эпĕ иккенне ĕненччĕр тесе, сире халех каласа паратăп.

20. Чăн-чăнах калатăп сире: Эпĕ кама яратăп, çавна йышăнакан Мана йышăнать; Мана йышăнакан, Мана Яракана йышăнать", — тенĕ.

Иисус, вӗренекенӗсенчен пӗри, Хӑйне тытса парасси ҫинчен пӗлтерни

21. Ҫакна каласан, Иисусӑн кӑмӑлӗ хуҫӑлнӑ, Вӑл вара каланӑ: "Чӑн-чӑнах калатӑп сире, сирӗнтен пӗри Мана тытса парӗ", — тенӗ.

22. Ҫавӑн чух вӗренекенӗсем Вӑл кам ҫинчен каланине пӗлмесӗр, пӗр-пӗрин ҫинелле пӑхкалама пуҫланӑ.

23. Унӑн вӗренекенӗсенчен пӗри, Иисус юратаканни, Иисусӑн кӑкӑрӗ ҫумӗнче ларнӑ;

24. Петр текен Симон, ҫавна кам ҫинчен каланине ыйтса пӗлме, ӑна паллӑ туса кӑтартнӑ.

25. Вӑл, Иисусӑн кӑкӑрӗ ҫумне тӗртӗнсе, Ӑна каланӑ: "Вӗрентекен! Кам вӑл?" — тенӗ.

26. Иисус каланӑ: "Ҫӑкӑр татӑкне Эпӗ кама пуҫса парӑп, ҫавӑ", — тенӗ. Вара ҫӑкӑр татӑкне пуҫса, Симон ывӑлне Иуда Искариота панӑ.

27. Ҫав татӑк хыҫҫӑн Иуда ӑшне шуйттан кӗнӗ. Унтан Иисус ӑна каланӑ: "Мӗн тӑвас тетӗн, часрах ту", — тенӗ.

28. Вӑл ӑна мӗншӗн ҫапла каланине, унта ларакансенчен нихӑш те ӑнланса илеймен.

29. Иудӑра укҫа арчи пулнӑ, ҫавӑнпа хӑшӗсем: "Иисус ӑна, праҫнике хамӑр валли мӗн кирлине е ыйткалакансене мӗн те пулин пама хушать пулӗ" — тесе шухӑшланӑ.

30. Вӑл татӑкне илсенех тухса кайнӑ; ун чух каҫ пулнӑ. Вӑл тухса кайсан,

31. Иисус каланӑ: "Паян Этем Ывӑлӗ мухтава тухрӗ, Ун урлӑ Турӑ та мухтава тухрӗ;

32. Турӑ Ун урлӑ мухтава тухрӗ пулсан, Турӑ та Ӑна мухтава кӑларӗ, часах Ӑна мухтава кӑларӗ.

33. Ачасем! Манӑн сирӗнпе пӗрле нумай пулма-

лла мар ёнтĕ: эсир Мана шырăр. Эпĕ Иудейсене каланă пек, Эпĕ каякан çĕре эсир пыраймăр тесе, халĕ сире те калатăп.

34. Сире çĕнĕ заповедь паратăп,пĕр-пĕрне юратăр; Эпĕ сире юратнă пек, эсир те пĕр-пĕрне юратăр;

35. Пĕр-пĕрне юрататăр пулсан, эсир Манăн вĕренекенсем иккенне пурте пĕлĕç".

Иисус, Петр Унран тунасси çинчен пĕлтерсе калани

36. Петр текен Симон Ăна каланă: "Вĕрентекен! Эсĕ ăçта каятăн?" — тенĕ. Иисус ăна хирĕç каланă: "Эпĕ каяс çĕре, эсĕ халь Ман хыççăн пыраймăн, кайран Ман хыçран пырăн", — тенĕ.

37. Петр Ăна каланă: "Вĕрентекен! Сан хыççăн эпĕ мĕншĕн халь пыраймăп? Эпĕ Саншăн хамăн чуна та паратăп", — тенĕ.

38. Иисус ăна хирĕç каланă: "Маншăн хăвăн чунна та парăн-и? Чăн-чăнах калатăп сана: автан авăтиччен, эсĕ Манран виçĕ хут тунăн", — тенĕ.

14 - мĕш ГЛАВА

"Сирĕн чĕрĕрсем ан хăраччăр..."

1. **СИРĔН** чĕрĕрсем ан хăраччăр; Турра ĕненĕр, Мана та ĕненĕр.

2. Манăн Атте çуртĕнче вырăн нумай; апла пулмасан, Эпĕ сире каланă пулăттăм. "Эпĕ сирĕн валли вырăн хатĕрлеме каятăп".

3. Кайсан вара, сирĕн валли вырăн хатĕрлĕп те каллех килсе, эсир те Манпа пĕрле пулăр тесе, сире Хам патăма илсе кайăп.

4. Эпĕ ăçта каяссине эсир пĕлетĕр, çулне те пĕлетĕр", — тенĕ.

5. Фома Ăна каланă: "Вĕрентекен! Эсĕ ăçта каяссине эпир пĕлместпĕр; тата çулне мĕнле пĕлме пултарăпăр?" — тенĕ.

6. Иисус ăна каланă: "Çул та, чăнлăх та, чĕрĕлĕх паракан та Эпĕ; Ман урлă пымасан, Манăн Атте патне никам та пыраймĕ;

7. Эсир Мана пĕлнĕ пулсан, Манăн Аттене те пĕлнĕ пулăттăр; паянтан ĕнтĕ пĕлетĕр Ăна, куртăр та Ăна", — тенĕ.

8. Филипп Ăна каланă: "Вĕрентекен! Аçуна кăтарт та, çитĕ вара пире", — тенĕ.

9. Иисус ăна каланă: "Филипп, Эпĕ сирĕнпе мĕн чухлĕ пурăнтăм, çапах эсĕ Мана пĕлместĕн-и? Мана куракан Аттене те курнă; мĕнле тата эсĕ: "Аçуна кăтарт пире?" — тесе калатăн.

10. Эпĕ Атте ăшĕнчине, Атте те Ман ăшрине эсĕ вара ĕненместĕн-и? Эпĕ сире калакан сăмахсене Хамран каламастăп; Ман ăшра тăракан Атте, Вăл çак ĕçсене тăвать.

11. Мана ĕненĕр, Эпĕ Атте ăшĕнче, Атте те Ман ăшра; апла мар пулсан, Мана ĕçсем тунинчен ĕненĕр.

12. Чăн-чăнах калатăп сире: Мана ĕненекен, Эпĕ тăвакан ĕçсене те тăвĕ, çавсенчен те ытларах тăвĕ; мĕншĕн тесен Эпĕ Хамăн Атте патне каятăп.

13. Ман ятпа эсир Аттерен кирек мĕн ыйтсан та, Аттем Ывăлĕ урлă мухтава тухтăр тесе, Эпĕ эсир ыйтнине тăвăп;

14. Ман ятпа эсир мĕн ыйтсан та, Эпĕ çавна тăвăп.

15. Мана юрататăр пулсан, Ман заповедьсене тытса тăрăр.

Святой Сывлăша çĕр çине ярасси çинчен калани

16. Эпĕ Аттене тархаслăп та сире валли урăх Лăплантаракан ярĕ, Вăл сирĕнпе ĕмĕрех пулĕ,

17. Вăл чăнлăх Сывлăшĕ, тĕнче Ăна йышăнма пултараймасть, мĕншĕн тесен Ăна курмасть, пĕлмест те Ăна; эсир Ăна пĕлетĕр, Вăл сирĕнпе пĕрле, малашне те сирĕн ăшăрта пулĕ.

18. Сире тăлăха хăвармăп; сирĕн пата килĕп.

19. Вăхăт нумай юлмарĕ ĕнтĕ, Мана тĕнче урăх кураймĕ; эсир Мана куратăр, мĕншĕн тесен Эпĕ чĕрĕ, эсир те чĕрĕ пулатăр.

20. Çав кун эсир, Эпĕ Атте ăшĕнчине, эсир Ман ăшрине, Эпĕ те сирĕн ăшăртине пĕлĕр.

21. Кам Ман заповедьсене асра тытса вĕсене пурнăçласа тăрать, вăл Мана юратать; кам Мана юратать, çавна Манăн Аттем те юратĕ; Эпĕ те ăна юратса, Хам Ăна курăнăп", — тенĕ.

22. Иуда (Искариот мар) Ăна каланă: "Вĕрентекен! Мĕншĕн вара Эсĕ Хăвна тĕнчене мар, пире кăтартасшăн?" — тенĕ.

23. Иисус ăна хирĕç каланă: "Кам Мана юратать, вăл Ман сăмаха тытса тăрĕ; ăна Манăн Атте те юратĕ, Эпир вара ун патне пырса, ун ăшĕнче Хамăра пурăнмалли вырăн тăвăпăр.

24. Мана юратман çын Ман сăмахсене тытса тăмасть; эсир илтекен сăмах Манăн мар, вăл Мана Яракан Аттен сăмахĕ.

25. Çакна Эпĕ сире хăвăрпа пĕрле чух кларăм.

26. Атте Ман ятăмпа яма пулнă Лăплантаракан Святой Сывлăш, Эпĕ сире мĕн каланине пурне те пĕтĕмпех вĕрентсе çитерĕ, сире аса илтерĕ.

27. Канăçлăх хăваратăп сире, Хамăн канăçлăха сире паратăп; Эпĕ сире тĕнче панă пек памастăп. Сирĕн чĕрĕрсем ан пăлханччăр, ан хăраччăр.

28. Эпĕ сире:” Сирĕн патран кайăп, вара татах сирĕн пата килĕп” — тесе каланине эсир илтрĕр. Эсир Мана юрататăр пулсан: ”Эпĕ Атте патне каятăп” — тесе каланăшăн, эсир савăннă пулăттăр; мĕншĕн тесен Манăн Атте Манран аслă.

29. Акă ĕнтĕ, Эпĕ сире çавăн çинчен, вăл пулса çитсен эсир Мана ĕненĕр тесе, çавă пуличчен малтанах каласа патăм.

30. Ман сирĕнпе нумай калаçмалла мар ĕнтĕ, çак тĕнчен пуçлăхĕ килет; Манра унăн нимĕн те çук.

31. Эпĕ Аттене юрататăп, çавна тĕнчене пĕлтер есшĕн, Атте Мана хушнă пек тăватăп; тăрăр, каяр кунтан”.

15 - мĕш ГЛАВА

Христос ăшĕнче яланах пулма кирли

1. **ЭПĔ** чăн иçĕм çырли Аври, Манăн Атте--иçĕм çырли пахчи Хуçи;

2. Çырла пулман Ман туратăма, Вăл кирек хăшне те касса пăрахать; çырли пулаканнине, кирек хăшне те çырли тата нумайрах пултăр тесе тасатать.

3. Эсир ĕнтĕ, Эпĕ сире вĕрентсе каланă сăмах тăрăх тасалтăр.

4. Ман ăшăмра пулăр, Эпĕ те сирĕн ăшăрта пулăп. Турат хăйĕн аври çинче пулмасан, хăй тĕллĕн çырла ӳстерейместь; Ман ăшра пулмасан, эсир те çавăн пекех пулатăр.

5. Эпĕ çырла Аври, эсир турачĕсем; кам Ман ăшра пулать, Эпĕ те ун ăшĕнче пулăп, вăл вара нумай çимĕç кӳрет; мĕншĕн тесен Мансăр пуçне эсир нимĕн те тума пултараймастăр.

6. Ман ăшра пулмасан, турата касса пăрахнă пек кăларса пăрахĕç, вăл типсе кайĕ; ун пек туратсене пуçтарса вутта пăрахаççĕ те вĕсем çунса каяççĕ.

7. Эсир Ман ăшра пулсан, Ман сăмахсем те сирĕн ăшăрта пулĕç; вара мĕн кирлине ыйтăр, пурте сире пулĕ.

8. Эсир нумай çимĕç *(усă)* кӳрсен, çавăн тăрăх Ман Аттем те мухтава тухĕ, эсир вара Манăн вĕренекенсем пулăр.

9. Атте Мана юратнă пек, Эпĕ те сире юратрăм; эсир те Эпĕ юратнă пек юратăр.

10. Эпĕ Атте хушнине туса тăтăм, çавăнпа Атте Мана юрататъ; эсир Эпĕ хушнине туса тăрсан, Эпĕ те сире юратса тăрăп.

11. Çакна Эпĕ сире, Ман савăнăç сирĕн ăшăрта пултăр, сирĕн савăнăçăр çителĕклĕ пултăр тесе каларăм.

12. Эпĕ сире çакна тума хушатăп, Эпĕ сире юратнă пек, эсир те пĕр-пĕрне юратăр.

13. Çын хăйĕн тусĕшĕн, хăй чунне панинчен ытла урăх юрату çук.

14. Эпĕ хушнине туса тăрсан, эсир Манăн тусăмсем пулатăр.

15. Эпĕ сире чурасем тесе каламастăп ĕнтĕ, мĕншĕн тесен чура хăйĕн хуçи мĕн тунине пĕлмест; Эпĕ сире Хамăн Аттерен мĕн илтнине пĕтĕмпех каласа патăм, çавăнпа тусăмсем тесе каларăм.

16. Эсир Мана суйласа илмен, Эпĕ сире суйласа илтĕм; эсир кайса усă кӳрсе çӳрĕр, эсир усă туни малалла пытăр тата Аттерен эсир Ман ятпа кирек мĕн ыйтсан та, Вăл сире патăр тесе, Эпĕ сире суй-

ласа хутăм.

”Тĕнче сире кураймасть пулсан...”

17. Эпĕ сире çакна тума хушатăп, эсир пĕр-пĕрне юратăр.

18. Тĕнче сире кураймасть пулсан, пĕлсе тăрăр, Мана сирĕнтен малтан кураймиç пулчĕ.

19. Эсир тĕнчерен пулнă пулсан, тĕнче хăйĕнне юратнă пулĕччĕ; эсир тĕнчерен пулман пирки, Эпĕ сире ку тĕнчерен суйласа илтĕм, çавăнпа сире тĕнче кураймасть.

20. Эпĕ сире: чура хăйĕн хуçинчен аслă мар, тесе каланă сăмаха астăвăр, Мана хăваларĕç пулсан, сире те хăвалĕç; Ман сăмаха тытса тăрсан, сирĕнне те тытса тăрĕç.

21. Çавсене пурне те сире Ман ятшăн тăвĕç, мĕншĕн тесен вĕсем Мана Яракана пĕлмеççĕ.

22. Эпĕ килсе вĕсене каламан пулсан, вĕсем çылăхсăр пулнă пулĕччĕç; халь ĕнтĕ хăйсен çылăхĕсенчен тӳрре тухаймаççĕ.

23. Мана курайман çын Манăн Аттене те кураймасть.

24. Эпĕ вĕсен хушшинче никам та тума пултарайман ĕçсене туса кăтартман пулсан, вĕсен çылăх пулмĕччĕ; халь ĕнтĕ çав ĕçсене курчĕç, çапах Мана та, Манăн Аттене те курайми пулчĕç.

25. Вĕсен законĕнче: ”Мана усăсăр курайми пулчĕç” — тесе çырни вырăна килчĕ. *(Псал. 68:5)*

26. Лăплантаракан чăнлăх Сывлăшĕ килсен, Вăл Ман çинчен пĕлтерсе тăрĕ, Эпĕ Ăна сирĕн çине Аттерен илсе ярăп, Вăл Аттерен тухать;

27. Эсир те Ман çинчен пĕлтерекенсем пулатăр,

мĕншĕн тесен эсир малтанах Манпа пĕрле.

16 - мĕш ГЛАВА

Тĕнче малашне те ĕненекенсене хăваласси çинчен Христос калани

1. **ÇАКНА** Эпĕ сире, эсир ан улталанăр тесе каларăм.

2. Сире синагогасенчен хăваласа кăларĕç; вахăт çитет ĕнтĕ, сире вĕлерекен кирек кам та, эпĕ Турра юрăхлă ĕç тăватăп тесе шухăшлĕ.

3. Вĕсем Аттене те, Мана та пĕлмен пирки çапла тăвĕç.

4. Çакна Эпĕ сире, çав вăхăт çитсен, Эпĕ çавăн çинчен каланине эсир аса илĕр тесе каларăм; малтан Эпĕ çавна Хам сирĕнпе пĕрле пулнăран каламарăм.

5. Халь ĕнтĕ, Эпĕ Хама Яракан патне каятăп, сирĕнтен пĕри те Манран: "Ăçта каятăн?" — тесе ыйтмасть.

6. Эпĕ сире çакна каланăран, сирĕн чĕрĕрсем хуйхăпа тулчĕç.

Святой Сывлăш ĕçĕсем

7. Эпĕ сире чăннине калатăп, Эпĕ кайсан сирĕншĕн аван пулĕ; мĕншĕн тесен Эпĕ каймасан, сирĕн пата Лăплантаракан килмĕ; кайсан, Эпĕ Ăна сирĕн пата ярăп.

8. Вăл килĕ те, тĕнче çылăхĕ çинчен, чăнлăх çинчен тата суд çинчен кăтартса тăрĕ:

9. Çылăх çинчен, Мана ĕненменнине;

10. Чăнлăх çинчен, Эпĕ Атте патне кайнине, Мана ĕнтĕ урăх кураймăр;

11. Суд çинчен, çак тĕнчен пуçлăхĕ айăпа юлнине.

12. Манăн сире каламалли татах нумай, анчах эсир халь пурне те вырнаçтараймăр.

13. Çав чăнлăх Сывлăшĕ килсен, сире пур чăнлăха та вĕрентĕ; Вăл Хăйĕнчен каламĕ, мĕн илтнине калĕ, малашне мĕн пуласси́не те сире пĕлтерĕ.

14. Вăл мухтава кăларĕ Мана, мĕншĕн тесен Вăл Ман ĕçсене туса сире пĕлтерĕ.

15. Аттен мĕн пурри, пурте Манăн; çавăнпа Эпĕ сире, Вăл Ман ĕçсенех туса сире пĕлтерĕ тесе каларăм.

Иисус вĕренекенĕсене Хăй çĕр çинчен каясси çинчен пĕлтерни

16. Часах эсир Мана кураймăр, кайран каллех Мана курăр; мĕншĕн тесен Эпĕ Атте патне каятăп", — тенĕ.

17. Çавăнта Унăн вĕренекенĕсенчен хăшпĕрисем пĕрне-пĕри каланă:" Мĕн калать Вăл пире, часах Мана кураймăр, кайран каллех курăр, Эпĕ Атте патне каятăп тет?"

18. Вĕсем татах каланă: "Мĕн калать вара Вăл, часах тесе?" Пĕлместпĕр, тем калать?" — тенĕ.

19. Хăйĕнчен мĕн ыйтассине пĕлсе, Иисус вĕсене каланă: "Эсир пĕр-пĕринчен: "часах Мана кураймăр, кайран каллех курăр" — тесе Эпĕ калани çинчен ыйтатăр-и?

20. Чăн-чăнах калатăп сире; эсир ĕсĕклесе йĕрĕр, хурланса макăрăр, тĕнче ун чухне савăнĕ; эсир хуйхăллă пулăр, çапах та эсир хуйхăрни савăнăçпа тулĕ.

21. Арăм çăмăлланнă чух асапланать, мĕншĕн те-

сен унăн вăхăчĕ çитнĕ; ачине çуратсан, тĕнчере çын çуралнăшăн савăннипе хăй асап курнине манса каять.

22. Çавăн пек эсир те халĕ хуйхăпа тулнă, анчах эпĕ сире каллех курăп, вара сирĕн чĕрĕрсем савăнса кайĕç, сирĕн савăнăçăра сирĕнтен никам та туртса илеймĕ.

23. Çав кун вара эсир Манран нимĕн çинчен те ыйтмăр. Чăн-чăнах калатăп сире, Аттерен эсир Ман ятпа кирек мĕн ыйтсан та, Вăл сире парĕ.

24. Ку таранччен эсир Ман ятпа нимĕн те ыйтмарăр; ыйтăр, ыйтсан илĕр, сирĕн савăнăçăр çителĕклĕ пултăр.

25. Халиччен Эпĕ сире юптаруллă каларăм; вăхăт çитет ĕнтĕ, ун чух сире юптаруллă каламăп, Атте çинчен сире тӳррипе каласа пĕлтерĕп.

26. Çав кун эсир Ман ятăмпа ыйтăр; Эпĕ сире, Аттерен сирĕншĕн ыйтăп тесе каламастăп:

27. Атте сире Хăй юратать, мĕншĕн тесен эсир Мана юратрăр тата Эпĕ Атте патĕнчен килнине те ĕнентĕр.

28. Эпĕ Атте патĕнчен анса тĕнчене килтĕм; каллех тĕнчене хăварса Атте патне каятăп", — тенĕ.

29. Унăн вĕренекенĕсем Ăна каланă: "Акă халь Эсĕ тӳррипех калатăн, пĕртте юптаруллă каламастăн;

30. Халь ĕнтĕ куратпăр, Эсĕ пурне те пĕлетĕн, Хăвăнтан кам та пулин ыйтни Сана кирлĕ мар; çавăнпа ĕнтĕ, Эсĕ Турă патĕнчен анса килнине ĕненетпĕр", — тенĕ.

31. Иисус вĕсене хирĕç каланă: "Халĕ ĕненетĕр?

32. Акă, вăхăт çитет, çитрĕ те ĕнтĕ, эсир пурте харпăр хăй еннелле саланса каятăр та Мана пĕччене хăваратăр; анчах Эпĕ пĕччен мар, мĕншĕн тесен Манпа пĕрле Атте.

33. Çакна Эпĕ сире, эсир Манра канăçлăх тупăр тесе каларăм. Тĕнчере сире хуйхă пулĕ; çапах та çирĕп тăрăр: Эпĕ тĕнчене çĕнтертĕм.

17 - мĕш ГЛАВА

Христос Хăйĕннисемшĕн кĕлĕ туни

1. **ÇАК** сăмахсене каланă хыççăн, Иисус Хăйĕн куçĕсемпе пĕлĕт çинелле пăхса каланă: "Эй, Аттем! Вăхăт çитрĕ ĕнтĕ: Хăвăн Ывăлна мухтава кăлар, Санăн Ывăлу та Сана мухтава кăларĕ.

2. Эсĕ пур этеме те Унăн аллине пана, Эсĕ Ăна панисене, Вăл пурне те ĕмĕрлĕх пурнăç парать.

3. Ĕмĕрлĕх пурнăç çакă ĕнтĕ, Сана, пĕртен-пĕр чăн Турра тата Эсĕ янă Иисус Христоса пĕлни.

4. Эпĕ Сана çĕр çинче мухтава кăлартăм, Эсĕ Мана тума хушнă ĕçе туса çитертĕм;

5. Эй, Аттем, тĕнчене пултаричченех Сан патăнта пулнă Хăвăн мухтавлăхупа, Мана та Эсĕ паян мухтава кăлар.

6. Эсĕ Мана çак тĕнчерен панă çынсене, Эпĕ Санăн ятна пĕлтертĕм; вĕсем Санăн пулнă, Эсĕ вĕсене Мана патăн, вĕсем Сан сăмахна тытса тăчĕç,

7. Эсĕ Мана пани, пурте Санран иккенне вĕсем халь ăнланса илчĕç;

8. Мана панă Санăн сăмахусене Эпĕ вĕсене каласа патăм та, вĕсем чăнлăха ăнланса илсе йышăнчĕç, Мана Эсĕ янине тата Эпĕ Сан патăнтан килнине ĕненчĕç.

9. Эпĕ пĕтĕм тĕнчешĕн кĕлĕ тумастăп, çаксемшĕн, Эсĕ Мана панисемшĕн кĕлĕ тăватăп: мĕншĕн тесен вĕсем Санăн;

10. Манăнни пурте Санăн, Санăнни те Манăн; Эпĕ вĕсем урлă мухтава тухрăм.

11. Эпĕ ĕнтĕ тĕнчере мар, вĕсем тĕнчере, Эпĕ Сан патна пыратăп. Эй, Святой Аттем! Хăвăн ятушăн вĕсене сыхласам, Эсĕ Мана панисем, вĕсем те Пирĕн пекех пĕр пулччăр.

12. Эпĕ вĕсемпе пĕрле тĕнчере пулнă чух, Сан ятушăн вĕсене сыхласа усрарăм; Эсĕ Мана панисене Эпĕ сыхларăм, пĕтес ывăлран пусне, пĕри те вĕсенчен пĕтмерĕç, Çырура каланă сăмах вырăна килчĕ ĕнтĕ *(Псал. 108:8-17)*

13. Халĕ Сан патна пыратăп, вĕсен ăшĕнче Ман савăнăç çителĕклĕ пултăр тесе, çак сăмахсене тĕнчере чухне каласа хăваратăп.

14. Эпĕ вĕсене Санăн сăмахна каласа патăм та, тĕнче вĕсене курайми пулчĕ, мĕншĕн тесен Эпĕ тĕнчерен пулман пек, вĕсем те ку тĕнчерен мар.

15. Вĕсене Эсĕ тĕнчерен ил тесе кĕлĕ тумастăп, усалран вĕсене сыхла тесе кĕлĕ тăватăп;

16. Эпĕ тĕнчерен мар, вĕсем те тĕнчерен мар.

17. Вĕсене Хăвăн чăнлăхупа тасат: Санăн сăмаху чăнлăх.

18. Эсĕ Мана тĕнчене янă пек, Эпĕ те вĕсене тĕнчене ятăм;

19. Вĕсем чăнлăхпа тасалччăр тесе, Эпĕ вĕсемшĕн Хама паратăп.

20. Вĕсемшĕн анчах кĕлĕ тумастăп, вĕсем каланă сăмах тăрăх Мана ĕненекенсемшĕн те кĕлĕ тăватăп:

21. Вĕсем пурте пĕр пулччăр; эй, Аттем, Эсĕ мĕнле Ман ăшра, Эпĕ те Сан ăшăнта, вĕсем те çавăн пек Пирĕн ăшра пĕр пулччăр, — Мана Эсĕ янине тĕнче ĕнентĕр.

22. Эсĕ Мана панă мухтава та Эпĕ вĕсене патăм: Эпир пĕр пулнă пек, вĕсем те пĕр пулччăр.

23. Эпĕ вĕсен ăшĕнче, Эсĕ Ман ăшра; вĕсем те пĕтĕмпех пĕр пулччăр, Эсĕ Мана ярса, вĕсене те Мана юратнă пекех юратнине тĕнче пĕлтĕр.

24. Эй, Аттем! Эсĕ Мана панисем те ăçта Эпĕ, çавăнта Манпа пĕрле пулччăр, Эсĕ тĕнчене пултариччен малтанах Мана юратса панă мухтава вĕсем курччăр тетĕп.

25. Эй, Тӳрĕ Аттем! тĕнче Сана пĕлмерĕ; Эпĕ Сана пĕлтĕм, çаксем те Эсĕ Мана янине пĕлчĕç;

26. Эпĕ вĕсене Санăн ятна пĕлтертĕм, пĕлтерĕп те, Эсĕ Мана юратнă юрату вĕсен ăшĕнче пултăр, Эпĕ те вĕсен ăшĕнче пулăп".

ИОАНН ÇЫРНĂ ТАСА ЕВАНГЕЛИЙĔН

Виççĕмĕн пайĕ

Тĕнчене çăлăнăç пани

18-мĕш главаран 21-мĕш главана çитиччен

Иисуса тытса пани, пăталани, чĕрĕлсе тăни, чĕрĕлсе тăнă хыççăн Хайĕн вĕренекенĕсене курăнни

Христос хĕрес çинче вилсе, виççĕмĕш кунне Хăйĕн мухтавлăхĕпе вилĕмрен чĕрĕлсе тăни, ĕненекен çынна ырлăх тата тĕлĕнмелле пиллĕх парса тăрать. Турăшăн ĕçлесси те, çăлăнăç илесси те, Туррăн Патшалăхĕнче Христоспа пĕрле пулса ĕмĕрех Ăна мухтасси те, çавă пурте "Христос чĕрĕлсе тăрса, тупăка пушатса хăварнинчен" килет.

Çырура каланă пек: "Христос пирĕн çылăхсемшĕн вилнĕ, Ăна çĕре пытарнă; виççĕмĕш кунне Вăл чĕрĕлсе тăнă" (1 Кор. 15:3-4). Хăйĕн вилĕмĕпе Христос вилĕме çĕнтернĕ. Вăл пирĕн çылăхсемшĕн вилнĕ. Виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе тăни, Вăл Турă Ывăлĕ пулнине анчах мар, пирĕн çылăхсемшĕн Хăйĕн Ӳтне хĕрес çинче панă парнене Атте Турă йышăннине те пĕлтерет!

Малалла çырнă главасене тĕплĕн, Ывăлне пирĕн çылăхсемшĕн парса, Ăна Хăйĕн вăйĕпе вилĕмрен чĕртсе тăратнă Турра тав туса вулăр!

18 - мěш ГЛАВА

Иисус Гефсимани пахчинче

1. **ИИСУС** çакна каласан, Хăйěн вěренекенěсемпе Кедрон шывěн тепěр енне кайнă, унта йывăç пахчи пулнă, çав пахчана Вăл Хăйěн вěренекенěсемпе кěнě.

2. Çав вырăна Ăна тытса паракан Иуда та пěлнě, мěншěн тесен Иисус Хăйěн вěренекенěсемпе унта час-часах пынă.

3. Çапла вара, Иуда пěр ушкăн салтак, пуп-пуçлăхěсен тарçисене тата фарисейсене илнě те, хунарсемпе, çуртасемпе тата хěçсемпе унта пынă.

4. Иисус Хăйěнпе мěн пулассине пěлсе, вěсем патне тухнă та вěсене каланă: "Кама шыратăр?" — тенě.

5. Ăна хирěç каланă: "Назорей Иисусне", — тенě. Иисус вěсене каланă: "Вăл Эпě", — тенě. Вěсемпе пěрле Ăна тытса паракан Иуда та тăнă.

6. Иисус вěсене: "Вăл Эпě", — тесе каласан, вěсем каялла чакса çěре ӳксе пěтнě.

7. Вěсенчен каллех ыйтнă: "Кама шыратăр?" — тенě. Вěсем каланă: "Назорей Иисусне", — тенě.

8. **Иисус каланă: "Эпě сире, Вăл Эпě тесе каларăм; эппин Мана шыратăр пулсан, вěсене ан тивěр, кайччăр вěсем", — тенě.**

9. Çапла Иисус каланă сăмах вырăна килнě: "Эсě Мана панисене, Эпě пěрне те пěтермерěм" *(Иоан. 17:12)*

10. Петр текен Симонăн хěç пулнă, вăл хěçне туртса кăларнă та пуп-пуçлăхěн чурине çапса, унăн сылтăм хăлхине касса татнă; çав чура Малх ятлă

пулнă.

11. Иисус вара Петра каланă: "Хĕçне йĕннине чиксе хур; Атте Мана панă куркана Манăн епле ĕçмелле мар-ха?" — тенĕ.

Иисус пуп-пуçлăхĕсен умĕнче тата Петр тунни

12. Унтан салтаксем, пин çын пуçлăхĕ тата Иудей пуçлăхĕсем Иисуса тытнă та çыхса хунă.

13. Ăна малтан Анна патне илсе кайнă; Анна вăл, çав çул пуп-пуçлăхĕ пулса тăнă Каиафăн хунĕ пулнă;

14. Çав Каиафа, халăхшăн пĕр çын пĕтни авантарах пулĕ тесе, Иудейсене канаш панă.

15. Иисус хыçĕнчен Петр текен Симонпа тепĕр вĕренекенĕ пынă; çав вĕренекенĕ пуп-пуçлăхĕн пĕлĕшĕ пулнă, вăл вара Иисуспа пĕрле пуп-пуçлăхĕн картишне кĕнĕ;

16. Петр алăк хыçĕнче тулта тăнă. Кайран, пуп-пуçлăхĕн пĕлĕшĕ пулнă вĕренекенĕ тухнă та, алăк патĕнче сыхласа тăракан хĕрарăма каласа, Петра та илсе кĕнĕ.

17. Çавăнта алăк патĕнче сыхласа тăракан хĕрарăм тарçă Петра каланă: "Эсĕ те Çак Çыннăн вĕренекенĕ мар-и?" — тенĕ. Петр каланă: "Çук", — — тенĕ.

18. Ун чух сивĕ пулнă, çавăнпа тарçăсемпе пуçлăхсем те вут хурса ăшăнса тăнă; вĕсемпе пĕрле Петр та ăшăнса тăнă.

19. Пуп-пуçлăхĕ Иисусран, Ун вĕренекенĕсем çинчен тата Унăн вĕрентĕвĕ çинчен ыйтнă.

20. Иисус ăна хирĕç каланă: "Эпĕ тĕнчене пĕр пытармасăр вĕрентрĕм; Эпĕ яланах Иудейсем пуçтарăнакан синагогара тата чиркӳре вĕрентрĕм, вăрттăн нимĕн те каламарăм;

21. Манран мĕншĕн ыйтатăн? Эпĕ мĕн каланине илтекенсенчен ыйт; акă, вĕсем Эпĕ мĕн каланине пĕлеççĕ", — тенĕ.

22. Вăл çакна каласан, çавăнта тăракан тăрçăсенчен пĕри, Иисуса питĕнчен çупса ярса каланă: "Эсĕ пуп-пуçлăхне хирĕç çапла калатăн-и?" — тенĕ.

23. Иисус ăна хирĕç каланă: "Эпĕ усал каларăм пулсан, мĕн усаллине каласа кăтарт; тĕрĕс каларăм пулсан, эсĕ мĕншĕн Мана çупатăн?" — тенĕ.

24. Анна Иисуса çыхнипех Каиафа ятлă пуп-пуçлăхĕ патне янă.

25. Петр текен Симон ăшăнса тăнă. Çавăнта ăна каланă: "Эсĕ те Унăн вĕренекенĕ мар-и?" — тенĕ. Вăл тунса каланă: "Çук", — тенĕ.

26. Пуп-пуçлăхĕ тарçисенчен пĕри, хăлхине Петр касса татнийĕн хурăнташĕ каланă: "Эпĕ сана хам Унпа пĕрле пахчара курмарăм-и вара?" — тенĕ.

27. Петр каллех туннă; çавăнтах автан авăтса янă.

Иисус Пилат умĕнче

28. Тул çутăлсан, Иисуса Каиафа патĕнчен преторийăна илсе кайнă; Пасха çимелле пулнăран, ирсĕрленес мар тесе, вĕсем преторийăна кĕмен.

29. Пилат вĕсем патне тухса каланă: "Çак Çынна эсир мĕн тĕлĕшпе айăплатăр?" — тенĕ.

30. Вĕсем ăна хирĕç каланă: "Вăл усал çын пулман пулсан, эпир Ăна сана тытса паман пулăттăмăр", — тенĕ.

31. Пилат вĕсене каланă: "Эсир Ăна илĕр те хăвăр законăр тăрăх суд тăвăр", — тенĕ. Иудейсем ăна каланă: "Пире никама та вĕлерме ирĕк паман", — тенĕ.

32. Çапла вара, Иисус Хăй мĕнле вилĕмпе виле-

сси ҫинчен пӗлтерсе каланӑ сӑмах вырӑна килнӗ.

33. Унтан Пилат каллех преторийӑна кӗнӗ те, Иисуса чӗнсе илсе каланӑ: " Эсӗ Иудей Патши-и?" — тенӗ.

34. Иисус ӑна хирӗҫ каланӑ: "Эсӗ ку сӑмаха хӑвӑнтан калатӑн-и, е сана Ман ҫинчен ыттисем каласа пачӗҫ?" — тенӗ.

35. Пилат каланӑ: "Эпӗ Иудей ҫынни-и-мӗн? Хӑвӑн халӑху тата пуп-пуҫлӑхӗсем Сана ман алла тытса пачӗҫ; мӗн турӑн Эсӗ?" — тенӗ.

36. Иисус хирӗҫ каланӑ: "Ман Патшалӑх ку тӗнчерен мар; Ман Патшалӑх ку тӗнчерен пулнӑ пулсан, Маншӑн ӗҫлекенсем Мана Иудейсен аллине тытса парас мар тесе тӑрӑшнӑ пулӗччӗҫ, анчах та Манӑн Патшалӑх халӗ кунта мар", — тенӗ.

37. Пилат Ӑна каланӑ: "Эсӗ Патша-и вара?" — тенӗ. Иисус хирӗҫ каланӑ: "Мана Патша тесе эсӗ тӗрӗс калатӑн; Эпӗ чӑнлӑх ҫинчен каласа пӗлтерме ҫуралнӑ, ҫавӑншӑн тӗнчене килнӗ; чӑнлӑхран пулсан, кирек кам та Ман сасса итлет", — тенӗ.

38. Пилат Ӑна каланӑ: "Мӗн вӑл чӑнлӑх?" — тенӗ. "Ҫакна каласан, каллех Иудейсем патне тухнӑ та вӗсене каланӑ: "Эпӗ Унра нимӗнле айӑп та тупаймастӑп;

39. Пасха умӗн сирӗн, мана пӗрне кӑларттарса ямалли йӑла пур: сире валли Иудея Патшине кӑларса ярам-и?" — тенӗ.

40. Вара каллех пурте кӑшкӑрса ярса каланӑ: "Ӑна мар, Вараввӑна!" — тенӗ. Варавва вӑрӑ-хурах пулнӑ.

19 - мĕш ГЛАВА

”Çавăнта пăталанă Ăна...”

1. **ÇАВ** вăхăтра Пилат Иисуса илнĕ те, Ăна хĕнеме хушнă.

2. Салтаксем вара, йĕплĕ йывăç хуллинчен пуç кăшăлĕ явса, Иисус пуçĕ çине хунă, Хăйне хĕрлĕ тумтир тăхăнтарнă.

3. Унтан каланă: ”Иудея Патши савăн!” — тенĕ. Вара Ăна питĕнчен çупа-çупа янă.

4. Пилат каллех тухса вĕсене каланă: ”Акă, Унра нимĕнле айăп та тупманнине сире пĕлтерме, Ăна сирĕн пата кăларатăп”, — тенĕ.

5. Вара Иисус йĕплĕ пуç кăшăлĕпе, хĕрлĕ тумтирпе тухнă. Унтан Пилат вĕсене каланă: ”Акă Çын!” — тенĕ.

6. Пуп-пуçлăхĕсемпе чиркÿре ĕçлекенсем Иисуса курсан: ”Пăталаттар Ăна, пăталаттар!” — тесе кăшкăрса янă. Пилат вĕсене каланă: ”Эсир Ăна хăвăр илсе пăталăр, эпĕ Унра нимĕнле айăп та тупаймастăп”, — тенĕ.

7. Иудейсем ăна хирĕç каланă: ”Пирĕн закон пур, пирĕн закон тăрăх Вăл вилме тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен Вăл Хăйне Турă Ывăлĕ вырăнне хурать”, — тенĕ.

8. Пилат, çав сăмаха илтсен тата ытларах хăраса кайнă.

9. Вăл каллех преторийăна кĕнĕ те, Иисуса каланă: ”Эсĕ ăçтан?” — тенĕ. Иисус ăна хирĕç нимĕн те каламан.

10. Пилат Ăна каланă: ”Эсĕ мана нимĕн те каламастăн-и? Пĕлместĕн-и, ман Сана пăталаттарма та ирĕк пур, кăларса яма та ирĕк пур!” — тенĕ.

11. Иисус каланă: ”Сана çӳлтен паман пулсан, Ман çинче сан нимĕнле ирĕк те пулман пулĕччĕ: çавăнпа та, Мана сан аллуна тытса паракана ытларах çылăх пулать”, — тенĕ.

12. Пилат çав вăхăтран Иисуса кăларса яма май шыранă. Вара Иудейсем кăшкăрма пуçланă: ”Ăна кăларса ярсан, эсĕ кесарĕн тусĕ мар; хăйне хăй патша вырăнне хуракан кирек кам та кесарĕн тăшманĕ пулать”, — тенĕ.

13. Пилат çак сăмаха илтсен, Иисуса тула кăларнă та, Лифостротон, еврейле Гаввафа текен суд тăвакан вырăна ларнă.

14. Ун чухне Пасха праçникĕ умĕнхи эрнекун, ирхине улттăмĕш сехет тĕлĕ пулнă. Вара Пилат Иудейсене каланă: ”Çакă, сирĕн Патшăр!” — тенĕ.

15. Вĕсем каллех: ”Тыт, тыт, пăталаттар Ăна!” — тесе кăшкăрса янă. Пилат вĕсене каланă: ”Сирĕн Патшăра ман пăталас-и?” — тенĕ. ”Пуп-пуçлăхĕсем каланă: ”Кесарьтен пуçне пирĕн урăх патша çук”, — тенĕ.

16. Юлашкинчен вара Пилат, Ăна хĕрес çине пăталама вĕсене панă. Унтан Иисуса тытнă та илсе кайнă.

17. Вăл Хăйĕн хĕресне йăтса, Çамка вырăнĕ, еврейле Голгофа текен вырăна çитнĕ;

18. Çавăнта Ăна хĕрес çине пăталанă; Унпа пĕрле тата икĕ вăрă-хураха, пĕрне пĕр енне, тепĕрне тепĕр енне, Иисуса варрине пăталанă.

19. Пилат вара: ”Иудея Патши, Иисус Назорей” — — тесе çыру çырнă та, ăна хĕрес çине çапса хунă.

20. Çавăн пек çырнă сăмахсене Иудейсенчен нумайăшĕ вуланă, мĕншĕн тесен Иисуса пăталанă вырăн хуларан инçе мар пулнă, çыруне Еврейле, Грекле тата Римле çырса çапнă.

21. Иудейсен пуп-пуçлăхĕсем Пилата каланă: "Иудея Патши" — тесе ан çыр, Вăл Хăйĕн çинчен: "Эпĕ Иудея Патши" — тесе калатчĕ тесе çыр, — — тенĕ.

22. Пилат вĕсене хирĕç каланă: "Мĕн эпĕ çыртăм, çавна çыртăм ĕнтĕ", — тенĕ.

23. Салтаксем Иисуса хĕрес çине пăталасан, Унăн тумтирне илнĕ те, кашни салтакĕ валли пĕрер пай туса, тăвата пая уйăрнă, хитонне те илнĕ; хитонĕ çĕлесе тунăскер пулман, ăна çӳлтен пуçласа пĕтĕмпех тĕртсе тунă.

24. Çавăнпа вĕсем пĕр-пĕрне каланă: "Ăна çурар мар, уншăн шăпа ярăпăр, кама тухĕ?" — тенĕ. Çапла вара пророксем малтанах çырни вырăна килнĕ: "Ман тумтире хăйсем хушшинче уйăрчĕç тата Манăн тумтиршĕн шăпа ячĕç" *(Псал. 21:19)*. Салтаксем çавăн пек хăтланнă.

25. Иисуса пăталанă хĕрес патĕнче Унăн Амăшĕ, Амăшĕн аппăшĕ Мария Клеопа тата Мария Магдалина тăнă.

26. Иисус Хăйĕн Амăшне тата унта тăракан Хăй юратнă вĕренекенне курсан, Амăшне каланă: "Анне! çакă, Санăн ывăлу!" — тенĕ.

27. Унтан вĕренекенне каланă: "Ку, санăн Аннӳ!"— тенĕ. Çавăнтан кайран, çав вĕренекен Ăна хăй патне илнĕ.

28. Вара Иисус, Çыру çинче çырни пĕтĕмпех пулса çитнине пĕлсе: "Ăшăм çунать", — тенĕ.

29. Çавăнта туллиех уксус тултарнă (хĕрхӳллентернĕ эрех) савăчĕ ларнă. Салтаксем губкăна уксус сăхтарса илнĕ те, патак вĕçне тирсе, Унăн çăварĕ патне илсе пынă.

30. Иисус уксуса тутанса пăхсан каланă: "Ĕнтĕ

пулса çитрĕ!" — тенĕ, Унтан, пуçне уснă та, сывлăшне кăларса янă.

31. Ун чухне эрнекун пулнă, çавăнпа вилнĕ çынсен ÿчĕсене шăматкуна хĕрес çинче хăварас мар тесе, (мĕншĕн тесен çав шăматкун Иудейсен пысăк праçникĕ пулнă) Иудейсем Пилатран, вĕсен ури тунисене çапса ватса, вĕсене хĕрес çинчен антарма ыйтнă.

32. Вара салтаксем пынă та, Иисуспа пĕрле пăталанисен ури тунисене иккĕшĕнне те çапса ватнă;

33. Иисус патне пырсан, Вăл вилнине курса, Унăн ури тунисене çапса ватман.

34. Анчах та пĕр салтакĕ Ăна аяккинчен сăнăпа чикнĕ те, çавăнтах Юнпа шыв юхса тухнă.

35. Çакна куракан хăй каласа кăтартать, вăл калани тĕрĕс; вăл сире ĕнентересшĕн, хăй чăн каланине пĕлет.

36. Çак ĕç пулса çитсе, Çыру çинче çырни вырăна килнĕ: "Унăн шăмми ванмĕ" *(Исход 12:46)*

37. Çыру çинче тата тепĕр вырăнта каланă: "Хăйсем сăнăпа чикни çине пăхĕç" *(Захар. 12:10)*

Иисуса тупăка хуни

38. Çавăн хыççăн Аримафейăри Иосиф, Иисусăн Ÿтне хĕрес çинчен антарма Пилатран ирĕк ыйтнă. Иосиф вăл, Иисусăн вĕренекенĕ пулнă, анчах — — Иудейсенчен хăранă пирки палăртман; Пилат ăна чарман. Вара вăл кайнă та, Иисусăн ÿтне антарнă.

39. Малтан Иисус патне çĕрле пыракан Никодим та пынă, вăл çĕр литра яхăн смирнăпа алой хутăштарса тунă ырă шăршăллă çу илсе пынă.

40. Вĕсем Иисусăн Ÿтне илнĕ те, Иудейсем пытаракан йăлапа ырă шăршăллă çусем сĕрсе, пирпе

чĕркенĕ.

41. Иисуса пăталанă вырăнта йывăç пахчи пулнă, çав пахчара унччен никама та пытарман çĕнĕ тупăк пулнă:

42. Иудейсен эрнекунĕ пулнăран тата тупăк çывăх пулнă пирки, Иисуса çав тупăка хунă.

20 - мĕш ГЛАВА

Виççĕмĕш кунне Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăни

1. **ЭРНЕ** пуçламăшĕнче (вырсарникун) ирхине ирех, тĕттĕм чухне Мария Магдалина тупăк патне пынă та, тупăк умĕнчи чула йăвантарса янине курнă;

2. Вăл вара чупса кайнă та, Петр текен Симон патне тата Иисус юратнă тепĕр вĕренекенĕ патне пырса, вĕсене каланă: "Вĕрентекене тупăкран илсе кайнă, Ăна ăçта хунине пĕлместпĕр", — тенĕ.

3. Çавăнтах Петрпа тепĕр вĕренекенĕ тухнă та, тупăк патне чупса кайнă.

4. Вĕсем иккĕшĕ те пĕрле чупнă, анчах тепĕр вĕренекенĕ, Петртан хытăрах чупнă пирки тупăк патне малтан çитнĕ.

5. Вăл пĕшкĕнсе пăхнă та пирсем выртнине курнă; çапах тупăка кĕмен.

6. Ун хыççĕнчен Петр текен Симон та çитнĕ, вăл тупăка кĕнĕ те, унта Иисуса чĕркенĕ пирсем анчах выртнине курнă;

7. Иисусăн пуçне чĕркенĕ тутăрĕ те чĕркенипех, пирĕсемпе пĕрле мар, урăх çĕрте уйрăм выртнă.

8. Унтан тупăк патне маларах чупса çитнĕ вĕренекенĕ те кĕнĕ, вара курнă та, ĕненнĕ;

9. Çырура çырнă тăрăх, Иисус вилĕмрен чĕрĕлсе тăмалли çинчен вĕсем ун чухне пĕлеймен пулнă.

10. Вара вĕренекенĕсем каллех хăйсем патне таврăннă.

Христос чĕрĕлсе тăнă хыççăн Марийăна курăнни

11. Мария тупăк умĕнче макăрса тăнă; макăрнă чухнех вăл тупăка пĕшкĕнсе пăхнă,

12. Вара унта шурă тумтир тăхăннă икĕ Ангел ларнине курнă; пĕри Иисус Ӳчĕ выртнă вырăнăн пуç тĕлĕнче, тепри ури вĕçĕнче ларнă.

13. Вĕсем ăна каланă: "Арăм! Эсĕ мĕншĕн макăратăн?" — тенĕ. Вăл вĕсене каланă: "Манăн Вĕрентекене илсе кайнă, Ăна ăçта хунине пĕлместĕп", — тенĕ.

14. Çакна каласан каялла çаврăнса пăхнă та, Иисус тăнине курнă; анчах вăл Иисуса паллайман.

15. Иисус ăна каланă: "Арăм, эсĕ мĕншĕн макăратăн? Кама шыратăн? — тенĕ. "Мария, ку пахчаçă пулĕ тесе, Ăна каланă: "Эй, ырă çын! Ăна эсĕ илнĕ пулсан, кала мана, ăçта хутăн эс Ăна, вара эпĕ Ăна илĕп", — тенĕ.

16. Иисус ăна каланă: "Мария!" — тенĕ. Вăл çаврăнса пăхнă та каланă: "Раввуни!" — тенĕ. Вăл: "Вĕрентекен!" — тени пулать.

17. Иисус ăна каланă: "Ман çумма ан сĕртĕн, мĕншĕн тесен Эпĕ Хамăн Атте патне çĕкленмен-ха; эсĕ Манăн тăвансем *(веренекенсем)* патне кайса вĕсене кала: Эпĕ Хамăн Атте патне, сирĕн Аçăр патне, Хамăн Туррăм патне, сирĕн Туррăр патне çĕкленетĕп", — тенĕ.

18. Мария Магдалина вĕренекенĕсем патне кайнă та, Вĕрентекене курни çинчен тата Вăл ăна мĕн каланине каласа кăтартнă.

Чĕрĕлнĕ Иисус вĕренекенĕсене пĕр пӳртре курăнни

19. Эрне пуçламăшĕнче çав кунах *(вырсарникун)* каçалапа, вĕренекенĕсем Иудейсенчен хăраса, хăйсем пухăннă пӳртĕн алăкне питĕрсе ларнă чух, Иисус пынă та вĕсен варрине тăрса, вĕсене каланă: "Канăçлăх пултăр сире!" — тенĕ.

20. Çавна каласан, Вăл вĕсене Хăйĕн аллисене, урисене, аяк пĕрчисене кăтартнă. Вĕренекенĕсем, Вĕрентекене курсан савăннă.

21. Иисус вĕсене иккĕмĕш хут каланă: "Канăçлăх пултăр сире! Мана Атте янă пек, Эпĕ те сире яратăп", — тенĕ.

22. Çакна каласан вĕрнĕ те, вĕсене каланă: "Святой Сывлăша йышăнăр;

23. Камăн çылăхĕсене каçаратăр, çавăн каçарăнĕç; камăнне каçармăр, унăн каçарăнмĕç", — тенĕ.

Чĕрĕлнĕ Христос Фомана курăнни

24. Вуникĕ вĕренекенĕсенчен пĕри, Йĕкĕреш текен Фома, Иисус пынă чух вĕсемпе пĕрле унта пулман.

25. Ытти вĕренекенĕсем ăна каланă: "Эпир Вĕрентекене куртăмăр", — тенĕ. Вăл вĕсене каланă: "Унăн аллинче пăтаран юлнă суранĕсене курмасăр, хамăн пӳрнесемпе пăтаран юлнă суранĕсене тĕкĕнсе пăхмасăр тата хамăн алăпа Унăн аякне хыпаласа пăхмасăр, ĕненместĕп!" — тенĕ.

26. Сакăр кун иртсен, Унăн вĕренекенĕсем каллех çав пӳртре ларнă, вĕсемпе пĕрле Фома та пулнă.

Алăкне питĕрсе ларнă чух, Иисус пынă та варрине тăрса каланă: "Канăçлăх пултăр сире!" — тенĕ.

27. Унтан Фомана каланă: "Пӳрнӳне кӳр-ха кунта, Ман алăсене пăх; хăвăн аллупа Манăн аяк пĕрчине хыпаласа пăх; ĕненмесĕр ан юл, ĕнен", — тенĕ.

28. Фома Ăна хирĕç каланă: "Эсĕ манăн Вĕрентекенĕм, манăн Туррăм!" — тенĕ.

29. Иисус ăна каланă: "Эсĕ Мана курсан тин ĕнентĕн; курмасăр ĕненекенсем телейлĕ", — тенĕ.

Çак Евангелие çырнийĕн сăлтавĕ

30. Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсен умĕнче тата урăх хăватсем те нумай тунă, çавсем çинчен çак кĕнеке çине çырман;

31. Çаксене, Иисус Вăл, Турă Ывăлĕ Христос иккенне сире ĕнентересшĕн тата хăвăр ĕненнĕ тăрăх, Ун ячĕпе ĕмĕрлĕх пурнăçлă пулччăр тесе çырнă.

21 - мĕш ГЛАВА

Чĕрĕлсе тăнă Христос, Хăйĕн вĕренекенĕсене çăлăнăç çинчен вĕрентме яни

1. **ÇАВĂНТАН** кайран, Иисус татах Хăйĕн вĕренекенĕсене Тивериада тинĕсĕ патĕнче курăннă. Вăл çапла курăннă:

2. Петр текен Симон, Йĕкĕреш текен Фома, Галилейăри Кана хулинчи Нафанаил, Зеведей ывăлĕсем тата Унăн вĕренекенĕсенчен иккĕшĕ пурте пĕр çĕрте пулнă.

3. Петр текен Симон вĕсене каланă: "Эпĕ пулă тытма каятăп", — тенĕ. Лешсем, ăна каланă: "Эпир те санпа пĕрле пыратпăр", — тенĕ. Кайнă та, çавăнтах кимĕ çине кĕрсе ларнă, анчах çав каç вĕсем нимĕн те тытайман.

4. Тул çутăлсан, Иисус çыран хĕрринче тăнă; анчах вĕренекенĕсем, Вăл Иисус иккенне паллайман.

5. Иисус вĕсене каланă: "Ачасем! Сирĕн мĕн те пулин çимелли пур-и?" — тенĕ. Вĕсем Ăна хирĕç: "Çук" — тенĕ.

6. Вăл вĕсене каланă: "Тетелне киммĕн сылтăм енне ярăр, вара тытатăр", — тенĕ. Вĕсем тетелне ярсан, пулă нумай кĕнипе ăна туртса та кăларайман.

7. Иисус юратакан вĕренекенĕ вара Петра каланă: "Ку, Вĕрентекен!" — тенĕ. Петр текен Симон, ку Вĕрентекен тенине илтсен, хăйĕн тумтирне пилĕкне çавăрса çыхнă та (ун чух вăл çарамас пулнă) тинĕсе сикнĕ;

8. Ытти вĕренекенĕсем кимĕ çинче ишсе, пулăллă тетелне туртса пынă, (вĕсем çыран хĕрринчен аякра пулман, икçĕр чикене яхăн анчах пулнă).

9. Çыран хĕррине тухсан, вĕсем çунакан вутă çинче пулă тата çăкăр выртнине курнă.

10. Иисус вĕсене каланă: "Халь хăвăр тытнă пуллăрсене илсе килĕр", — тенĕ.

11. Петр текен Симон кайнă та, шултра пулă кĕрсе тулнă тетелне çыран хĕррине сĕтĕрсе кăларнă, çавăнта çĕр аллă виçĕ пулă пулнă; çавăн пек нумай пулă кĕнипе те вĕсен тетелĕ çурăлман.

12. Иисус вĕсене каланă: "Килсе çийĕр", — тенĕ. Вĕренекенĕсем Вăл Вĕрентекен иккенне пĕлсе, Унран: "Эсĕ кам?" — тесе ыйтма пĕри те хăйман.

13. Иисус пырса çăкăрне илнĕ те вĕсене панă,

пуллине те панӑ.

14. Ҫапла ӗнтӗ, Иисус вилӗмрен чӗрӗлсе тӑнӑ хыҫҫӑн, Хӑйӗн вӗренекенӗсене виҫҫӗмӗш хут курӑннӑ.

Эпир Христосшӑн юрӑхлӑ ӗҫлени вӑл — юрату

15. Вӗсем апат ҫинӗ чух, Иисус Петр текен Симона каланӑ: "Иона Симонӗ! Эсӗ Мана ҫаксенчен ытларах юрататӑн-и?" — тенӗ. Петр Ӑна каланӑ: "Эй, Вӗрентекен, тӗрӗс! Эпӗ Сана юратнине, Эсӗ Хӑвах пӗлетӗн", — тенӗ. Иисус ӑна каланӑ: "Манӑн путекӗмсене кӗт, — тенӗ.

16. Иккӗмӗш хут, татах ӑна каланӑ: "Иона Симонӗ! Эсӗ Мана юрататӑн-и?" — тенӗ. Петр Ӑна каланӑ: "Ҫапла Вӗрентекен, тӗрӗс! Эпӗ Сана юратнине, Эсӗ Хӑвах пӗлетӗн", — тенӗ. Иисус ӑна каланӑ: "Манӑн сурӑхсене кӗт", — тенӗ.

17. Унтан виҫҫӗмӗш хут ӑна каланӑ: "Иона Симонӗ! Эсӗ Мана юрататӑн-и?" — тенӗ. Петр хӑйӗнчен: "Эсӗ Мана юрататӑн-и?" — тесе виҫҫӗмӗш хут ыйтнӑшӑн хурланса, Ӑна каланӑ: "Вӗрентекен! Эсӗ пурне те пӗлетӗн; эпӗ Сана юратнине, Эсӗ пӗлетӗн", — тенӗ. Иисус ӑна каланӑ: "Манӑн сурӑхсене кӗт;

18. Чӑн-чӑнах калатӑп сана: ҫамрӑк чухне эсӗ пилӗкне ху ҫыхаттӑнччӗ те, каяс килнӗ ҫӗре каяттӑнччӗ; ватӑлсан хӑвӑн аллусене ҫӗклӗн, вара санӑн пилӗкне Урӑххи ҫыхӗ те, эсӗ каяс килмен ҫӗре сана илсе кайӗ"

19. Вӑл ҫакна, Петр мӗнле вилӗмпе вилсе Турра мухтава кӑларасси ҫинчен пӗлтерсе каланӑ. Ҫавна каласан, Петра каланӑ: "Ман хыҫҫӑн пыр", — тенӗ.

20. Петр çаврăнса пăхнă та, каçхи апат тунă чухне Иисусăн кăкăрĕ çумне сĕртĕнсе: "Эй, Вĕрентекен! Сана кам тытса парĕ?" — тесе ыйтнă, Иисус юратакан вĕренекенĕ те ун хыçĕнчен пынине курнă.

21. Ăна курсан, Петр Иисуса каланă: "Вĕрентекен! Ăна мĕн пулĕ?" — тенĕ.

22. Иисус ăна каланă: "Эпĕ ăна Хам киличченех пурăнтарасшăн пулсан та, санăн мĕн ĕç пур унпа?" Эсĕ пыр Ман хыçран", — тенĕ.

23. Вара вĕренекенĕсем хушшинче, çав вĕренекенĕ вилмест, тенĕ сăмах сарăлнă. Анчах Иисус, вăл вилмест, тесе каламан, Эпĕ ăна Хам киличченех пурăнтарасшăн пулсан та, санăн мĕн ĕç пур унпа, тесе каланă.

24. Çакăн çинчен çав вĕренекенĕ хăй курнине каласа парать, çакна та вăл çырнă; вăл каласа пĕлтерни чăн тĕрĕссине те пĕлетпĕр.

25. Иисус тата урăх ĕçсем те нумай тунă: çавсем çинчен пĕтĕмпех çырас пулсан, çырнă кĕнекесене тĕнчере те шăнăçтарма çук тесе шутлатăп. Аминь.